Библиотека ... М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 23 юнкун № 18 (8670)

Хакĕ 20 пус.

34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

В. И. Ленин вилнĕренпе XXVIII çул çитнĕ ятпа пулнă хурлăхлă-чаплă лару (1 стр.).

Республикăри ĕçсыннисем В. И. Ленина хисеплесе асăнаççĕ (1 стр.).

Е. Семенов.—Большевиксен партийĕ ялхуçалăхне коллективизацилессишĕн пынă кĕрешӳре (2 стр.).

П. Викторов, Н. Орлов.—Тракторсене хăвăртрах юсамалла (2 стр.).

Т. Иванов.—Малта пыракан колхоз опытне вĕренеççĕ (2 стр.).

И. Сидоркин.—Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе салатса пĕтерни пулмалла мар (2 стр.).

Чăваш АССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне мĕн чухлĕ тултарни çинчен Чăваш АССР Статистика управленийĕ пĕлтерни (3 стр).

ЫЙТУСЕМПЕ ОТВЕТСЕМ. **П. Осипов.** — Чей кăмпи шывĕн сиплĕхĕ çинчĕн (3 стр.).

Александр Алга. — Хунавсем çинчен. Редакцие килнĕ калавсемпе сăвăсене пăхса тухни (3 стр.).

Тĕнчери халăхсем В. И. Ленина хисеплесе асăнаççĕ (4 стр.).

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, 1951—1952 çулсенчи кĕрхуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

17. Первомайски районĕнчи **Сталин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Ф. Куприянов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Никитин** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **А. Юрьев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 102,2 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 108,7 процент, турттарса кăлармалли плана 101,2 процент тултарнă.

18. Вăрнар районĕнчи **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Романов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **П. Григорьев** юлташ). Колхоз 1951 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне йывăç касса хатĕрлемелли, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент тултарнă.

19. Шăхасан районĕнчи **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Павлов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **А. Филиппов** юлташ, вăрман касса хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **И. Семенов** юлташ, лавçăсен бригадирĕ **Т. Андреев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,6 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100,9 процент, турттарса кăлармалли плана 101,5 процент тултарнă.

20. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи **Буденный ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. С. Савельев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. М. Савельев** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 107,7 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 121,7 процент тултарнă.

В. И. Ленин вилнĕренпе XXVIII çул çитнĕ ятпа пулнă хурлăхлă-чаплă лару

Совет Союзĕнчи халăхсем тата прогрессивнăй мĕнпур этемлĕх ĕнер хурлăхлă куна—коммунистсен партине тата тĕнчери пĕрремĕш советлă социализмлă государствăна тăваканĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен генилле çулпуçĕпе учителĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе XXVIII çул çитнĕ куна паллă турĕç.

Мускавра, ССР Союзĕн Государствăн академиллĕ Пысăк театрĕнче Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе XXVIII çул çитнине асăнса, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн, ВКП(б) Мускав область тата Мускав хула комитечĕсен, СССР Верховнăй Совечĕпе РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумĕсен, ĕçсынни депутачĕсен Мускав облаçĕпе Мускав хула Совечĕсен, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн, ВЛКСМ Мускав область тата Мускав хула комитечĕсен, ВЦСПС Президиумĕн, партипе совет, обществăллă организацисен тата Совет Çарĕн представителĕсемпе пĕрле ирттернĕ хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă.

Пысăк театр залĕнче шăп, калăр та чаплă. Сцена çинче шалта Владимир Ильичăн портречĕ, ăна ялавсемпе тата чĕрĕ чечек çыххисемпе илемлетнĕ. Сцена çинче çӳлте çак сăмахсене çырнă: «Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!»

18 сехет те 50 минут. Президиум сĕтелĕ умне **И. В. Сталин** юлташ, **В. М. Молотов, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, Н. С. Хрущев, Н. М. Шверник, М. А. Суслов, П. К. Пономаренко, М. Ф. Шкирятов** юлташсем тухаççĕ.

Пурте ура çине тăрса, Ленин ĕçне малалла генилле пурнăçласа пыракана—прогрессивнăй мĕнпур этемлĕхĕн çулпуçĕпе учительне И. В. Сталин юлташа чунтан-чĕререн хисеплесе саламлаççĕ. Залра тăвăллăн алă çупни янăраса тăрать.

Лару председателĕ **Н. М. Шверник** юлташ кĕске сăмах калать. Вăл Владимир Ильич Ленина ура çине тăрса хисеплеме чĕнет. Пурте ура çине тăраççĕ. Н. М. Шверник юлташ Ленинăн генилле идейисем пурнăçланса пыни çинчен, совет халăхĕ И. В. Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм строительствинче тунă çĕнтерӳсем çинчен калать.

Унтан вăл хурлăхлă-чаплă лару уçăлни çинчен пĕлтерет.

Н. М. Шверник юлташ доклад тума Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн директорне **П. Н. Поспелов** юлташа сăмах парать.

Докладчик ленинизм идейисен чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен калать. Ленинизм идейисем совет çыннисене паттăр ĕçре çĕнтерӳсем тума хавхалантараççĕ, çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн кĕрешме чĕнеççĕ, коммунизм тăтăклăнах çĕнтерессине ĕненсе тăнине çирĕплетеççĕ.

— Ленинпа Сталинăн аслă идейисем çĕр чăмăрĕн чи инçетри кĕтесĕсенчи ĕçсыннисем патне çитеççĕ,— тесе калать юлашкинчен докладчик.— Хальхи вăхăтра малалла пыракан идейăсене, ленинизм идейисене пĕтĕм тĕнчипех хăватлăн саралса пыма нимĕнле чăрмавсемпе чарусем те кансĕрлеме пултараймĕç.

Сывă пултăр ленинизм—этемлĕхе ирĕке кăлармалли пурне те çĕнтерекен ялав!

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ—«пирĕн саманан ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ!»

Сывă пултăр никам çĕнтерейми совет халăхĕ!

Ленин ялавĕпе, Сталин çул кăтартса пынипе—малалла, коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне!

Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. «Сывă пултăр Сталин юлташ!», «Аслă Сталина мухтав!», «Сталин юлташа урра!», «Юратнă çулпуçăмăрна учителĕмĕре Сталин юлташа урра!» тесе саламлаççĕ. Пухура пулнисем парти гимнне—«Интернационал» юрлаççĕ. Каллех тăвăллăн алă çупаççĕ, Ленин ĕçне малалла туса пыракан И. В. Сталин юлташ ячĕпе саламласа каланă сасăсем илтĕнеççĕ.

Колхозăн производство планĕ

Социализмлă халăх хуçалăхĕ—планлă хуçалăх. Пирĕн Тăван çĕршывра пур ĕçсене те государство паракан плансем тăрăх туса пыраççĕ. Халăх хуçалăх планĕсен вăйĕ çакăнта пулать: вĕсем, плансем, партипе правительствăн аслă политикине палăртса тăраççĕ, обществăллă пурлăха вĕçĕ-хĕррисĕр ӳстерсе пыма, халăх пурнăçне лайăхлатнăçемĕн лайăхлатма май параççĕ. Государствăн халăх хуçалăх планĕ мĕнпур совет çыннисене аслă ĕçе—коммунизм тăвас ĕçе пурнăçлама пĕтĕçтерет. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн çынсем плансене тултарас тата ирттерсе тултарас ĕçе хăйсен чысĕпе мухтавĕ тесе шутлаççĕ.

Ялхуçалăх артелĕсене план тăрăх аталантарса пырасси çинчен Сталин юлташ çапла каланă: «Колхоз вăл—шултра хуçалăх. Шултра хуçалăха плансăр тытса *пыма çук.* Çĕрĕçĕнче шултра хуçалăха, çĕршер, хăш чухне пиншер кил те пĕрлештерсе тăракан хуçалăха, планлă руководство йĕркипе çеç тытса *пыма* пулать».

Ĕçсене планласси колхоз строительствин хальхи тапхăрĕнче уйрăмах ӳсрĕ. Вак артельсене пĕрлештерсе пысăк артельсем тунă хыççăн планлас ĕçе татах та лайăхлатмалла. Обществăллă шултра хуçалăхсен халĕ ĕнтĕ малалла вăйлăн аталанма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Совет государстви МТС-сене парса тăракан хăватлă техникăпа колхозсенче тухăçлă ĕçлемелле, мичуринла агробиологи наукине çирĕп пурнăçламалла, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе анлă усă курмалла. Çавăн пек тăвас тесен, пур ĕçсене те планласа колхозсене ялан план тăрăх ертсе пымалла.

Хуçалăхри ĕçсене планлас тĕлĕшпе колхозсен опычĕ ӳссех пырать. Государство заданийĕсене шута илсе, кашни ялхуçалăх артелĕ производствăн çулталăк планне, приходпа расход сметине туса хатĕрлет, çакăнпа пĕрлех тата бригадăсемпе фермăсене çулталăкри производство заданийĕсем парать. Лайăх шухăшласа тунă производство планĕ колхозниксен ĕç программи пулса тăрать.

Республика ялхуçалăхĕ умне партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçласси производство планĕнче тĕп вырăн йышăнмалла. Ситес икĕ-виçĕ çул хушшинче гектартан пухса кĕртекен тĕштырă тухăçлăхне 18 центнертан кая мар ӳстерме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне хăпартма май паракан мероприятисене планра палăртса хумалла.

Производствăна план тăрăх ертсе пырас ĕçе нумай колхозсем çулсеренех лайăх йĕркелеççĕ. Ку тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнчи «Колос», Чкаловски районĕнчи «Гвардеец», Сĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь», Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсене уйрăмах палăртмалла. Çав колхозсен обществăллă хуçалăхĕ малалла хăвăрт тĕрекленсе пырать. Вĕсем пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх усраççĕ.

Анчах çакна та палăртмалла: колхозсенчи ĕçсене планлас енĕпе иртнĕ çулсенче çитменлĕхсем те пулнă. Сăмахран, пĕлтĕр производство планĕсем тăвассине вăраха янă, чылай колхозсенче вĕсене çураки тĕлне те туса пĕтереймен. Уйхир бригадисене производство заданийĕсене час-часах трактор бригадисен заданийĕсемпе çыхăнтармасăр панисем те пулкаланă. Уйрăм колхозсенче производство планне колхозниксен пухăвĕнче те сӳтсе явман. Кăçал çавăн пек çитменлĕхсем пулмалла мар. Ялхуçалăх ĕçĕсен 1952 çулхи государство планне колхозсене çитернĕ хыççăн халĕ çулталăкри производство планĕсене кашни колхозрах туса хатĕрлемелле.

План тума колхозниксен анлă массине, уйрăмах малта пыракансене хутшăнтарас пулать. Унсăрăн лайăх план туса хатĕрлеме çук. Колхозăн производство планĕ хуçалăха нумай енлĕ аталантарса пыма май патăр. Çавăн пек пултăр тесен, ялхуçалăх наукин çитĕнĕвĕсене, малта пыракансен опытне пурнăçлас ыйтусене тĕплĕ шута илмелле.

Тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне ӳстерме пăхнипе пĕрлех, ытти *отраслĕсене* те вăйлатса пыма палăртмалла. Хушма хуçалăхсем, вырăнтах строительство материалĕсем тăвассине организацилесси производство планĕнче хăйсене тивĕç вырăн йышăнччăр. Укса тупăшне ӳстересси, ăна типтерлĕ тыткаласси çине тимлĕ пăхмалла. 1952 çул валли хатĕрлекен приходпа расход сметисене кашни колхозрах укçана перекетлĕ тыткалама кирлине шута илсе тăвас пулать. Укçан кашни пусĕ обществăллă хуçалăха вăйлатма кайтăр.

Планлас ĕçре колхоз демократине çирĕп тытса пымалла. Производство планне, приходпа расход сметине тата бригадăсемпе фермăсене паракан заданисене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетмелле, çавăн чухне кăна плансем чăн-чăн ĕç программи пулса тăраççĕ. Бригадăсемпе выльăх-чĕрлĕх фермисене паракан заданисене пухура çирĕплетиччен малтан производство канашлăвĕсенче тĕплĕ тишкерсе тухмалла. Çав канашлусенче колхозниксем заданисене тултарма тата ирттерсе тултарма обязательствăсем илеççĕ. Пуçламăш парторганизацисен колхозсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе колхозниксен социализмлă ăмăртăвне куллен вăйлатса пымалла.

Ялхуçалăхне план тăрăх ертсе пырасси халăх хуçалăхĕшĕн питĕ кирлĕ ĕç пулать. Çавăнпа та вырăнти партипе совет органĕсен, уйрăмах ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сен колхозсенче производство планĕсем туса хатĕрлес ĕç çине тимлĕ пăхмалла Колхозсен производствине планлама тăтăшах пулăшу парса тăни кирлĕ. Çак ответлă ĕçе пурнăçлама ялхуçалăх специалисчĕсене пурне те явăçтармалла.

Пирĕн çĕршывра плансем закон йĕркипе пурнăçламалли документсем пулса тăраççĕ. Колхозсенче производство планĕсене, приходпа расход сметисене, производство заданийĕсене туса çирĕплетнĕ хыççăн вĕсене пурнăçа чыслă кĕртессишĕн анлă кĕрешӳ пуçармалла.

Иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсем ялхуçалăхне татах та хăвăртрах аталантарма май параççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен, механизаторсен хастарлăхĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Вĕсем тырпул тухăçлăхне, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне малалла ӳстерсе пыма сăмах параççĕ. Партипе совет организацийĕсен тата ялхуçалăх органĕсен тивĕçĕ производство планне кашни колхоз тăрăх тултармалла тăвасси пулать.

Ленин Мавзолейĕ патĕнче

Мускав. Хĕрлĕ площадь. Вăтă Кремль стенисем çемçе юрпа витĕннĕ. Кремль стени патĕнче ӳсекен, яланах сип-симĕс чăрăшсем халĕ шурă тĕслĕ курăнса лараççĕ.

Çак кунсенче Хĕрлĕ площадьре халăх уйрăмах нумай. Ĕçсыннисен *генилле* çулпуçĕпе учителĕн Владимир Ильич Ленинăн ятне ĕçсыннисем чĕрере усраççĕ. Тăван çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те килнĕ çынсем В. И. Ленин Мавзолейне пырса кураççĕ. Кунта килсе куракансем вырăсла, белорусла, грузинла, узбекла, латышла, литвалла тата ытти халăхсен чĕлхипе те калаçаççĕ. Мускавра пурăнакансем тата Мускава килнĕ çынсем вĕçĕ-хĕррисĕр Мавзолей патне пыраççĕ.

...Мавзолей алăкĕсем уçă. Алăк умĕнче хисеплĕ хуралти часовойсем хускалмасăр тăраççĕ. Курма пынă çынсем, çĕлĕксене хывса, чунтан хумханса, хуллен утса Мавзолее кĕреççĕ. Вĕсем хрустальрен тунă саркофаг тавра утса çаврăнаççĕ, юратнă Ильич çине куçа илеймесĕр пăхаççĕ.

Большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă Владимир Ильич Ленина ĕçсыннисем вĕçĕмсĕр юратаççĕ. Мĕнпур ĕçсыннисен çулпуçĕпе учительне халăх ĕмĕр-ĕмĕр асăнса пурăнĕ. Хĕрлĕ площадьри Мавзолее пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен представителĕсем килсе кураççĕ.

28 çул хушшинче В. И. Ленин Мавзолейĕнче 30,5 миллион çын ытла пулнă. (ТАСС).

Халăх демократи çĕршывĕсен дипломати представительствисен пуçлăхĕсемпе сотрудникĕсем В. И. Ленин мавзолейне пырса курнă

Январĕн 21-мĕшĕнче Болгари Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ С. Благоева госпожа, Румыни Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ С. Бугич господин, Монголи Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Н. Идамжаб господин, Китай Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Чжан Вэнь-тянь господин, Албани Халăх Республикин Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ В. Натанаили господин, Демократиллĕ Германи Республикин Дипломати Миссийĕн пуçлăхĕ Р. Аппельт господин, Польша Республикин Вăхăтлăх Поверенăйĕ Л. Погорилес господин, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенăйĕ Бан Сын Дик господин, Венгри Халăх Республикин Вăхăтлăх Поверенăйĕ З. Фодор господин, Чехословаки Республикин Вăхăтлăх Поверенăйĕ Д. Ечны господин, çавăн пекех тата асăннă çĕршывсен Посольствисемпе Миссийĕсен членĕсемпе сотрудникĕсем В. И. Ленин мавзолейне пырса, хăйсен дипломати представительствисен ячĕпе чечек çыххисем хунă.

Кунсăр пуçне, Китай Посольстви Китайри коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе, Монголи Посольстви Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе, Румыни Посольстви Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Румыни Халăх Республикин правительстви ячĕпе чечек çыххисем хунă. (ТАСС).

Шушенское ялĕнче

ШУШЕНСКОЕ (Красноярск крайĕ), январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Шушенское ялĕнчи пĕр çурт çине асăнса пурăнмалли хăма çапса хунă. Çак çуртра — В. И. Ленин музейĕ. Суртри япаласене, картинăсене, фотоӳкерчĕксене, документсен копийĕсене курса, В. И. Ленин Çĕпĕрти ссылкăра мĕнле пурăннипе тата унăн революциллĕ ĕçĕсемне паллашатăн. Кунта В. И. Ленин 1897 çултан пуçласа 1900 çула ситиччен пурăннă. Çавăнта пурăннă чухне Владимир Ильич 30 ытла произведени çырнă.

В. И. Ленин Шушенское ялĕнчен тăванĕсем патне янă пĕр çырура çапла çырнă: «Ялĕ пысăк, темиçе урамлă, урамĕсенче пылчăкпа тусан нумай—пурте мĕнле кирлĕ пекех. Ял çеçен хирте ларать—садсемпе нимĕнле ӳсентăрансем те çук».

Хальхи вăхăтра Шушенское ялĕ—крайăн тĕштырă акса тăвакан малта пыракан район центрĕ. Кунти В. И. Ленин ячĕпе тата Н. К. Крупская ячĕпе тăракан колхозсем вăйлă тырпул туса илнипе, садсем чĕртнипе, выльăх-чĕрлĕх нумай ĕрчетнипе, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпул нумай валеçсе панипе чапа тухнă.

Шушенское ялĕнче интеллигенци нумай—педагогсем, врачсем, агрономсем, ялхуçалăхĕнчи ытти специалистсем çĕршер çын шутланаççĕ. Яла пĕтĕмпех электрификациленĕ. Шушенское ялĕнче ялхуçалăх техникумĕ, вăтам тата пуçламăш шкулсем, кинотеатр, медицина учрежденийĕсем, библиотека пур, библиотекăра вуншар пин кĕнеке шутланать. Иртнĕ çулта район центрĕнче Совĕтсен çуртне туса пĕтернĕ. Халĕ гостиницăн икĕ хутлă çуртне туса пĕтереççĕ.

В. И. Ленинăн Шушенское ялĕнчи çурт-музейне пырса куракансен шучĕ çулленех ӳссе пырать. Иртнĕ çулта çурт-музея 40 пин çынна яхăн пырса курнă. Кунта Поляр лэш енче, Сахалинра, Камчаткăри Петропавловскра, Кавказра, Вăтам Азире, Мускавпа Ленинградра, Украинăпа Белоруссире, Тăван çĕршыври ытти вырăнсенче пурăнакан ĕçсыннисем пырса курнă.

Ленин кунĕсенче çурт-музея пырса куракансем уйрăмах нумай.

В. И. Ленин Сочиненийĕсен XI-мĕшпе XII-мĕш томĕсене узбек чĕлхипе пичетлесе кăларнă

ТАШКЕНТ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Узбек ССР-ĕнчи государство издательстви В. И. Ленин Сочиненийĕсен XI-мĕшпе XII-мĕш томĕсене узбек чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Кĕнекесене вырăсларан узбек чĕлхи çине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин институчĕн Узбекистанри филиалĕ куçарнă.

Республикăри ĕçсыннисем В. И. Ленина хисеплесе асăнаççĕ

ЕТĔРНЕ. Халăхсен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ куна районти ĕçсыннисем анлă паллă тăваççĕ.

Çак кунсенче колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче докладчиксемпе агитаторсем аслă çулпуçăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсемпе калаçусем ирттерчĕç. Вулав çурчĕсемпе клубсенче тата библиотекăсенче В. И. Ленин çинчен калакан кĕнекесен, фотоӳкерчĕксен витринисемпе выставкисене тунă.

Январĕн 20—21-мĕш кунĕсенче район центрĕнче, предприятисемпе колхозсенче партипе совет, профсоюз организацийĕсен тата ĕçсыннисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕсемпе пухăвĕсем пулса иртрĕç. Унта парти райкомĕн докладчикĕсем «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тема тăрăх докладсем туса пачĕç. Районти кинофикаци уйрăмĕ В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан кинокартинăсем кăтартать.

(Хамăр корр.).

• • •

ÇĔРПӲ, *январĕн 22-мĕшĕ. (Хамăр корр.).* Ĕнер, большевиксен партийĕпе тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăна туса хураканĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен юратнă çулпуçĕ тата учителĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ май, культура çуртĕнче район центрĕнчи партипе совет, комсомол, профсоюз тата обществăллă организацисен представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулчĕ.

Ларăва ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Кирпичев юлташ уçса, аслă Ленина хисеплесе ура çине тăма сĕнчĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ П. Степанов юлташ «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тема тăрăх доклад туса пачĕ.

Лару Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Ларура пулнисем «Выборгская сторона» ятлă кинофильм курчĕç.

• • •

КАНАШ. Хулари ĕçсыннисем аслă Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине паллă турĕç. Çак куна хатĕрленсе пин ытла агитатор хулари предприятисемпе учрежденисенче, чугун çул çинче ĕçлекенсем хушшинче аслă çулпуçăн пурнăçĕпе вилĕмсĕр ĕçĕсем çинчен, Ленин идейисем пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерсе пыни çинчен калаçусем ирттерчĕç, лекцисемпе докладсем вуларĕç.

Январĕн 21-мĕшĕнче чугун çул çинче ĕçлекенсен клубĕнче хулари партипе совет, комсомол, профсоюз тата обществăллă организацисен представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулчĕ. Унта 400 çын ытла пухăннă. Пухура пулнисем, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Сталин юлташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Политбюро составне суйларĕç.

«28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» темăпа ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ И. Новиков юлташ доклад туса пачĕ.

Ун хыççăн Ленин кунĕсенче кăтартма йĕтарласа тунă программăпа хатĕрленĕ концерт пулчĕ. Хулари 1-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсем «Эпир миршĕн» темăпа хатĕрленĕ литературăпа музыка монтажне кăтартрĕç. Вагонсем юсакан завод хорĕ аслă Ленинпа Сталин çинчен, большевиксен партийĕ, Тăван çĕршыв çинчен хунă юрăсене юрласа пачĕ.

Ĕçсыннисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕсем хулари ытти предприятисемпе учрежденисенче те пулса иртрĕç.

• • •

СĔНТĔРВĂРРИ. Январĕн 20—21-мĕшĕсенче районти пур предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе артельсенче, шкулсенче В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнĕ май ĕçсыннисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕсемпе пухăвĕсем пулса иртрĕç. Ларусемпе пухусенче В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад тума ВКП(б) райкомĕ 45 докладчик уйăрса янă.

Январĕн 21-мĕшĕнче хулари ĕçсынни представителĕсен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулчĕ. Ларура пулнисем, пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса, хисеплĕ президиума халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн политбюро составне суйларĕç.

«28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тема тăрăх ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Семенов юлташ доклад туса пачĕ.

Юлашкинчен пысăк концерт пулчĕ.

Районти пур шкулсенче те пионерсен сборĕсем пулса иртрĕç. Сборсенче ачасем В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен калаçусем ирттерчĕç, Тăван çĕршыв, парти, Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсене каларĕç.

• • •

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине паллă туса, «Волга» колхозри комсомолецсем вулав çуртĕнче витрина йĕркелерĕç. Унта В. И. Ленин çырнă произведенисем, Сталин юлташ Ленин çинчен çырнă кĕнекесем, вырăс тата чăваш халăх поэчĕсем Ленин çинчен çырнă илемлĕ литература кĕнекисем пур.

Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулти хор кружокĕ аслă çулпуç çинчен çырнă юрăсене юрласа пачĕ.

• • •

ЭЛĔК. Сормпуç Шĕмшешри çичĕ çул вĕренмелли шкул коллективĕ ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине паллă турĕ.

Пионер отрячĕсенче В. И. Ленина асăнса сборсем пулчĕç. Унта В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен докладсемпе калаçусем ирттерчĕç, пионерсем аслă çулпуçсем, Тăван çĕршыв çинчен хунă юрăсем юрларĕç тата сăвăсем каларĕç. Шкулти учительсем Пушкин ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тема тăрăх докладсем туса панă.

• • •

Чăваш педагогика институтĕнчи студентсемпе преподавательсем большевиксен партийĕпе Совет государствине туса хунă, халăхсен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине паллă турĕç. Докладчик-студентсем хулари ĕçсыннисем хушшинче В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсем чылай ирттернĕ. Студентсем хушшинче те «28 çул Ленинсăр, Сталин ертсе пынипе—Ленин çулĕпе» тема тăрăх докладсем пулнă.

Вуламалли залра, кабинетсенче В. И Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан кĕнекесен выставкине тата фотовитринăсем йĕркеленĕ.

Январĕн 21-мĕшĕнче марксизм-ленинизм кафедрин доцентĕ А. Воробьев юлташ студентсемпе преподавательсем валли В. И. Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Тракторсене хӑвӑртрах юсамалла

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Машина-трактор станцийӗн иртнӗ ҫулхи итогӗсем чаплах мар. Тракторсемпе тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне 97 процент кӑна тултарнӑ, колхозсемпе тунӑ договорти ӗҫсене вӑхӑтра тата пӗтӗмӗшпех пурнӑҫламан. МТС сунтармалли тата сӗрмелли япаласене 5 процент перекетлес вырӑнне 7 процент ытлашши тӑкакланӑ. Кашни 15 лаша вӑйлӗ тракторпа, ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласан, 1950 ҫулта вӑтам шутпа 728 гектар сухаланӑ чухлӗ ӗҫ тунӑ. 1951 ҫулта вара сахалтарах ӗҫленӗ, кашни условлӑ трактор пуҫне 551 гектар суха тунӑ чухлӗ кӑна ӗҫленӗ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен, иртнӗ ҫулта тракторсем юсавлӑ мар пирки ытларах ӗҫлемесӗр ларнӑ. Ку вӑл тракторсене вӑхӑтра, лайӑх юсаманни ҫинчен калать.

МТС дирекцийӗ иртнӗ ҫулхи йӑнӑшсенчен кӑсал та кирлӗ пек вывод туман, суракине хатӗрленес тӗлӗшпе юлса пырать. Иртнӗ кварталта тракторсем юсамалли плана 36 процент ытларах кӑна тултарнӑ.

Тракторсене юсама организованно тытӑнман. Юсав ӗҫне бригадӑллӑ меслетпе тунине пула, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ. Малтанхи виҫӗ уйӑхра пурӗ те 10 трактор е кашни уйӑхра 3 трактор кӑна юсаса кӑларнӑ.

Уйӑх каялла тракторсене узловой меслетпе юсама тытӑннӑ, мастерскойӗнче 16 узел йӗркеленӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ӗҫ ҫӗнӗлле, кал-кал пулса пымалла пек ӗнтӗ. Анчах апла мар. МТС руководителӗсем ҫӗнӗ меслетпе ӗҫлеме тытӑнсан, ҫак меслетӗн ӑнӑҫлӑхне татса паракан кирлӗ вӑй ҫинчен—ҫынсем ҫинчен маннӑ. Ҫынсене ҫӗнӗ меслетпе ӗҫлеме вӗрентмелле, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме кирлӗ условисем туса памалла пулнӑ. Анчах МТС дирекцийӗ те, партбюро та, рабочком та кирлӗ пек пуҫарулӑх кӑтартман. Узелсенче ӗҫлекенсем ҫӗнӗ технологие ҫителӗксӗр пӗлеҫҫӗ.

Общежитисенче вырӑн ҫителӗксӗр тата вӗсенче таса мар, час-часах шыв та пулмасть, пӗрлешӳллӗ апатланассине те йӗркелемен. Механизаторсем хушшинче агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе ҫителӗклӗ йӗркелемен. Трактористсем ҫӗршыври паллӑ механизаторсен чӗнӗвӗ ҫинчен те, ҫӗнӗллӗ ӗҫлекенсен ытти паха пуҫарӑвӗсем ҫинчен те пӗлмеҫҫӗ.

Калас пулать, чылай трактористсем узловой меслетпе ӗҫлемелли технологие малтанхи процесӗнчен пуҫласах лайӑх вӗренсе ҫитнӗ, вӗсем тухӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Анчах дирекци, партбюропа рабочком вӗсен опытне сӑнаса вӗренмеҫҫӗ, пӗтӗҫтермеҫҫӗ, сарса памаҫҫӗ. МТС директорӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ М. Тихонов юлташ хӑш узел, хӑш тракторист малта пынине те уҫҫӑн каласа параймасть. Лайӑх ӗҫлекенсен опытне стена хаҫачӗсем урлӑ сутатмаҫҫӗ. Машинӑсене юсама пуҫланӑранпа пурӗ те пӗр номер кӑна стена хаҫачӗ кӑларнӑ. МТС-ра кулленхи ӗҫсен итогӗсене тумаҫҫӗ, ҫав итогсем ҫинчен трактористсем пӗлмеҫҫӗ.

Тракторсем юсас ӗҫ ӑнӑҫлӑ пыманнине ҫакӑ та ҫирӗплетсе парать: январь уйӑхӗн малтанхи ҫур уйӑхӗнче пӗр трактор та юсаса кӑларман.

Ҫӗршыври ытти МТС-сенче анлӑ сарӑлнӑ узловой меслет мӗншӗн-ха Красноармейски МТС-ӗнче лайӑх результатсем параймасть?

Тӳрех калас пулать, МТС руководителӗсем, механиксем ҫак ҫӗнӗ меслете пурнӑҫласси ҫине ҫиелтен кӑна пӑхнӑ, ҫӗнӗ технологие вӗренессине япӑх йӗркеленӗ, ӗҫри культурӑна ӳстерессишӗн кӗрешмен. МТС-ра тракторсем юсамалли график ҫук, узелсене кунне мӗн чухлӗ ӗҫ тумалли заданисем памаҫҫӗ. Узелсем, механизаторсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту договорӗсем туман. Мастерскойри ӗҫсене пӗрер кунлӑха кӑна планлаҫҫӗ.

Мастерскойӗнче узелсене пӗр тивӗс ӗҫлеме вырӑн сахал. Хӑшпӗр бригадӑсем тракторсене кивӗ меслетпех юсаҫҫӗ.

МТС дирекцийӗ юсав ӗҫне чылай трактористсене хутшӑнтарман. Ӗҫ дисциплини начар пирки кашни кун ӗҫе 10—15 ҫын тухмасть. Ҫапла, январӗн 9-мӗшӗнче тракторсен пайӗсене ҫуса тасатакан узел кунӗпех ӗҫлемен. МТС дирекцийӗ ӗҫе тухман трактористсем пирки тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмасть.

Пӗрремӗш узел 9 трактор пайӗсене салатса тӑкнӑ, 2-мӗш узелта вара 3 трактор пайӗсене кӑна ҫуса тасатма ӗлкӗрнӗ, радиатор юсакансем икӗ трактор валли кӑна радиаторсем хатӗрленӗ. Чылай узелсенче инструментсем ҫитмеҫҫӗ. Трактор пайӗсене ҫунӑ ҫӗре вӑхӑтра шыв илсе пыманни те чӑрмав кӳрет.

Январӗн 10-мӗшӗнче пулса иртнӗ пухура механизаторсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, ҫапла вара, кашни кун пӗрер трактор юсаса кӑларма обязательство илнӗччӗ. МТС дирекцийӗпе пуҫламӑш парторганизаци тӑрӑшман пирки ҫак обязательство пурнӑҫланса пымасть; пуху хыҫҫӑн иртнӗ пилӗк кун хушшинче пӗр трактор та юсаса кӑларман-ха. Юсав ӗҫӗнче укҫа-тенкӗпе материалсене перекетлессишӗн те МТС руководителӗсем тивӗҫлипе кӗрешмеҫҫӗ.

Узловой меслетпе юсани ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, унӑн хакне йӳнетме, оборудованисемпе туллин усӑ курма, трактора лайӑх пахалӑхпа юсама май парать. МТС дирекцийӗн ҫак ҫӗнӗ меслетпе ӗҫлессине кирлӗ пек йӗркелемелле, ҫитменлӗхсене пӗтермелле.

«Чӑваш Коммуни» хаҫат бригади:
П. ВИКТОРОВ.
Н. ОРЛОВ.

Малта пыракан колхоз опытне вӗренеҫҫӗ

КАНАШ. Уҫырма ял Советне кӗрекен колхозсем районта кая юлса пыракан колхозсен шутӗнче пулнӑ. Пӗлтӗр ҫак колхозсем пӗрлешрӗҫ. Колхоз председателӗ пулма ялхуҫалӑх ӗҫне лайӑх пӗлекен, пултаруллӑ та ӗҫчен коммуниста З. Степанов юлташа суйларӗҫ.

Ҫулталӑк ҫурӑ хушшинче «Комбайн» колхоз чылай ҫитӗнӳсем турӗ. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виҫӗ ҫуллӑх плана пур енӗпе те тултарнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх йышӗ колхозсем пӗрлешичченхи шутран 2 хут ытларах ӳснӗ. 4 ҫӗнӗ вите, тырпул хумалли складсем, овощехранилище, электричество вӑйӗпе ҫӑм тапакан машина туса лартнӑ, нумай обществӑллӑ ҫуртсене тӗпренех юсанӑ. Колхоз автомашина, жнейкӑсем, сортировкӑсем тата ытти ялхуҫалӑх машинисем те нумай туянчӗ, 6 гектар ҫинче иккӗмӗш сад чӗртрӗ, пахча ҫимӗҫ туса илессине темиҫе хут ӳстерсе пысӑк тупӑш курма пуҫларӗ, хурт-хӑмӑр ӗрчетме тытӑнчӗ. Хальхи вӑхӑтра колхозниксем ҫӗнӗ клуб тата ытти обществӑллӑ ҫурт-йӗрсем тума строительство материалӗсем хатӗрлеҫҫӗ.

«Комбайн» колхозри колхозниксем тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша татах та ӳстерес тесе ҫине тӑрса кӗрешеҫҫӗ.

Нумаях пулмасть пирӗн колхоз председателӗ З. Степановпа 3-мӗш бригадӑн бригадирӗ А. Семенов Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхозра пулчӗҫ.

Канашлуран таврӑнсан вӗсем Сталин ячӗпе тӑракан колхозра выльӑх-чӗрлӗх шутне, унӑн тухӑҫлӑхне тата тырпул тухӑҫлӑхне мӗнле майпа ҫултан-ҫул ӳстерсе пыни ҫинчен, ӗҫе мӗнле организацилени тата ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетни ҫинчен колхозниксен пухӑвӗнче тӗплӗн каласа пачӗҫ.

— Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхоз чӑннипех пӗтӗм колхозсемшӗн лайӑх тӗслӗх пулса тӑрать. Вӗсенчен пирӗн нумай вӗренмелле,—терӗҫ колхозниксем.

Колхозра ятарласа агитаторсен семинарне ирттернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн агитаторсем бригадӑсенче Сталин ячӗпе тӑракан колхоз опычӗпе тӗплӗн паллаштарчӗҫ. Ку ӗҫ малалла та пырать. Агротехникӑпа зоотехникӑна вӗренмелли виҫӗ ҫуллӑх курссен руководителӗсене тырпул тухӑҫлӑхне, выльӑх-чӗрлӗх шучӗпе унӑн тухӑҫлӑхне ӳстермелли майсемпе тӗплӗн паллаштарма хушнӑ.

Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тесе, кашни бригада ҫывӑх вӑхӑтра хире 1.600-шер лавран кая мар тислӗк кӑларма, чылай кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ хатӗрлеме, юр тытма обязательство илчӗ. Ку ӗҫсене колхозниксемпе колхозницӑсем пысӑк ҫӗкленӳпе тӑваҫҫӗ.

Колхоз 10 тонна минераллӑ удобрени турттарса килчӗ. Акмалли вӑрлӑха сортласа, ҫителӗклӗ хатӗрлесе хунӑ. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма ӑшӑ та таса витесене вырнаҫтарнӑ, ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлесе хунӑ.

Т. ИВАНОВ.

Обществӑллӑ выльӑх чӗрлӗхе салатса пӗтерни пулмалла мар

Партипе правительство куллен пулӑшнипе пирӗн республикӑри колхозсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе чылай лайӑхлатрӗҫ. Нумай колхозсем продуктивлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли виҫӗ ҫуллӑх плана срокчен тултарчӗҫ. Анчах уйрӑм колхозсенче ку тӗлӗшпе пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха.

Елчӗк районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Михеев обществӑллӑ хуҫалӑха, уйрӑмах фермӑсен ӗҫне кирлӗ пек ертсе пыман. Вӑл витесене юсаса ӑшӑтассине организацилемен, выльӑх апатне салатса пӗтернӗ. Ҫавсене пула выльӑх-чӗрлӗх шучӗ чакнӑ. Колхоза хирӗҫле ӗҫсем тунӑшӑн Михеева икӗ ҫуллӑха тӗрмене хупса лартмалла тунӑ.

Муркаш районӗнчи Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхозри фермӑсен заведующийӗ Скобелев апат ҫителӗклӗ ҫинчех выльӑхсене тӗрӗс пӑхса усрама тӑрӑшман, выльӑхсем вилнӗ тӗслӗхсене пытарса пурӑннӑ. Халӑх сучӗ унтан выльӑхсем вилнипе пулнӑ тӑкака колхоза шыраса илсе памалла тунӑ.

Хӑшпӗр колхоз руководителӗсемпе ферма работникӗсем выльӑх апатне тӗрӗс расходласси ҫине тимлӗ пӑхмаҫҫӗ. Ҫакӑн пек тӗслӗхе Улатӑр районӗнчи «Заря», Чурачӑк районӗнчи «Красная Армия» колхозсем тӑрӑх илсе кӑтартма пулать. Кунта халиччен ӗҫленӗ колхоз председателӗсене ӗҫрен кӑларнӑ, судпа айӑпланӑ.

Уйрӑм колхозниксем фермӑсенче начар ӗҫлеҫҫӗ, колхоз правленийӗсем вӗсен ответлӑхне ӳстерме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Закон тӑрӑх лаша вилнӗшӗн айӑплӑ ҫынсенчен уншӑн, заготовительнӑй хакпа шутласа, виҫӗ хут чухлӗ шыраса илмелле. Ытти выльӑхсене вӗлерекен ҫынсене ҫак йӗркепе ответ тыттармалла: ӗне выльӑхшӑн, сурӑхшӑн, качакашӑн закупӑчнӑй хакӑн чи пысӑк виҫипе виҫӗ хут чухлӗ, ӑратлӑ выльӑх вилсен унӑн хакне виҫӗ хут чухлӗ шыраса илеҫҫӗ. Выльӑх вӑрланӑшӑн айӑплӑ ҫынна уншӑн пасар хакӗпе тӳлеттереҫҫӗ.

Хӑшпӗр халӑх сучӗсен ӗҫӗнче йӑнӑшсем пулаҫҫӗ, вӗсем колхоза кӳнӗ сиен хакне шутланӑ чухне тӗрӗс мар, пӗчӗккӗ кӑтартаҫҫӗ. Акӑ Ҫӗмӗрле районӗнчи халӑх сучӗ «Заря» колхозри Кузьмин колхозникран лаша вӗлернӗшӗн укҫа сахал шыраса илнӗ. Унтан закон тӑрӑх лаша хакне виҫӗ хут чухлӗ шыраса илмелле пулнӑ.

Айӑпа кӗнӗ колхозниксенчен укҫа шыраса илме тӑрӑшман колхозсем те часчасах тӗл пулаҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Прожектор» колхозра лаша вилнӗшӗн айӑплӑ ҫынсенчен укҫа шырама кирлӗ мар тесе решени йышӑннӑ. Ун пек туни закона хирӗҫ пырать, ӑна, паллах, улӑштарнӑ. Ҫав районти Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхозра Васильев, Кудрявцев колхозниксен тимсӗрлӗхне пула лаша вилнӗ. Вӗсем лаша илсе пама пулнӑ. Ҫавна май халӑх сучӗн судьи Уткин юлташ укҫа шыраса илес ӗҫе чарса лартнӑ. Анчах та айӑплисем ни лаша илсе паман, ни укҫан тӳлемен.

Выльӑх-чӗрлӗхе амантнӑшӑн тата вӗлернӗшӗн ответ тыттармалли йӗркене законпа тунӑ, ӑна никам та улӑштарма пултараймасть.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе тимлӗ пӑхса усрассине ялхуҫалӑх органӗсем те кирлӗ пек организацилемеҫҫӗ, вӗсем колхоз руководителӗсен ӗҫне ҫителӗксӗр тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ, пулӑшу сахал параҫҫӗ. Хӑшпӗр районсенчи ялхуҫалӑх пайӗсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе сыхласа усрас тӗлӗшпе кӑларнӑ законсене пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑрса кӗрешмеҫҫӗ.

Кӗсресем хӑм пӑрахнӑшӑн айӑплӑ колхозниксем пирки решени йышӑннӑ чухне те закона пӑсаҫҫӗ. Колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, тимлӗ пӑхманнипе лашасене ырханлантарнӑ, амантнӑ, ҫавӑн пекех кӗсресене хӑм пӑрахтарнӑ колхозниксенчен пилӗк процентран пуҫласа вунӑ процента ҫити ӗҫкунӗ катса юлма юрать.

Продуктивлӑ тата ӗҫре усӑ куракан выльӑхсене тӗрӗс пӑхса тата сыхласа усрасси, колхозсен ытти пурлӑхӗсене сыхласа усранӑ пекех, государствӑллӑ пысӑк ӗҫ пулса тӑрать. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе начар пӑхса сиен кӳрекенсене, выльӑх апатне салатса пӗтерекенсене ответ тыттарманни пулмалла мар, сиен кӳнӗ тӑкака вӗсенчен пӗтӗмпех шыраса илмелле.

Совет тата ялхуҫалӑх органӗсен, специалистсен ответлӑ тивӗҫӗ—выльӑхсене салатса пӗтерессинчен сыхласси пулать.

Прокуратура органӗсен колхозсенчи ответсӑрлӑха пӗтерме кирлӗ мерӑсем йышӑнмалла, выльӑх вилнӗ пӗр факта та тӗрӗслесе тухмасӑр хӑвармалла мар, уншӑн айӑплисене ҫийӗнчех ответ тыттарас пулать.

И. СИДОРКИН,
Чӑваш АССР прокурорӗ.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ юлса пырать

ЧКАЛОВСКИ. Районта малта пыракан колхозсем ҫуракине хатӗрленес ӗҫе куллен вӑйлатса пыраҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах «Гвардеец» колхоз паха тӗслӗх кӑтартать. Кунта ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтернӗ, ҫуракинче кирлӗ чухлӗ вӑрлӑх сортланӑ, минераллӑ удобренисем кӳрсе килес, вырӑнти удобренисене уя кӑларас, юр тытас ӗҫсем те лайӑх пулса пыраҫҫӗ. Агроном О. Захарова юлташ ертсе пыракан Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем те хастарлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем юр тытмалли плана иртгерсе тултарнӑ. Колхоз членӗсем хӗллехи агротехникӑллӑ ӗҫсене вӑхӑтра туса ирттерессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Анчах та районти чылай колхозсенче суракине большевикла хатӗрленни курӑнмасть-ха Уйрӑмах вӑрлӑх тасатас, ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫсем юлса пыраҫҫӗ «Кзыл Юлдуз» колхозра 938 центнер вӑрлӑх сортламалла пулсан, ку тарана 60 центнер ҫеҫ сортланӑ. «Пламя Октября» колхозра вара ку ӗҫе халӗ те пуҫӑнман. Агротехникӑллӑ ытти ӗҫсене те тума тытӑнман. Икӗ колхозӗнче те уя тислӗк сахал кӑларнӑ, вырӑнти ытти удобренисем пухма тытӑнманпа пӗрех. Ялхуҫалӑх машинисене юсамаҫҫӗ.

Ҫуракине Ворошилов ячӗпе, Сталин ячӗпе, Мичурин ячӗпе тӑракан, «Большевик» колхозсенче те япӑх хатӗрленеҫҫӗ.

Пуринчен те паллӑ, кадрсене вӗрентсе хатӗрлесси ялхуҫалӑхне вӑйлатмалли майсенчен пӗри пулса тӑрать. Анчах та чылай колхозсенче ку ӗҫе хакламаҫҫӗ. Райсовет исполкомӗн ялхуҫалӑх пайӗн работникӗсем кадрсене вӗрентес тӗлӗшпе колхозсене тивӗҫлипе пулӑшмаҫҫӗ. Агротехника курсӗсенче занятисем пулмаҫҫӗ.

И. МЕШКОВ.

Большевиксен партийӗ ялхуҫалӑхне коллективизацилессишӗн пынӑ кӗрешӳре

Колхоз стройне туса хуни большевиксен партийӗн тата пӗтӗм совет халӑхӗн чи пысӑк ҫӗнтерӗвӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Совет Союзӗнче хресчен ытӑвне ӑнӑҫлӑ татса пани пӗтӗм тӗнчери ӗҫхресченӗсене пусмӑрлӑхпа чухӑнлӑхран тухмалли тӗрӗс ҫула кӑтартса пачӗ.

Пролетариат хресченсен тӗп массипе союз тӑвасси ҫинчен В. И. Ленин вӗрентнине малалла аталантарса, Сталин юлташ пролетариатпа хресченсен тӗп интересӗсем пӗр пек пулнине, халӑх хуҫалӑхне социализмлӑ ҫулпа аталантарасси вӗсен пӗрлехи интересӗ пулнине кӑтартса панӑ.

Ленин вӗрентӗвне пур енчен те малалла аталантарса, Сталин юлташ ҫапла кӑтартса панӑ: пире хресченсемпе кирек мӗнле союз туни мар, хресченсем хушшинчи капиталистла элементсемпе кӗрешесси ҫинче никӗсленсе тӑракан союз туни ҫеҫ кирлӗ, тенӗ. Хресченсене пӗччен хуҫалӑхпа пурӑнас ҫул ҫинчен пӗрлешӳллӗ шултра хуҫалӑх ҫулӗ ҫине куҫармалла пулнӑ. Парти хӑйӗн экономикӑллӑ тӗрӗс политикине тытса пырса, майӗпен хресченсен тӗп массине социализм тӑвас ӗҫе хутшӑнтарнӑ. Малтан хресченсем хӑйсен чӗртаварне сутас тата промышленность таварӗсене сутӑн илес ӗҫе пӗрлешсе туса пынӑ, унтан вара производство ӗҫӗсене те пӗрлешсе туса пыма пуҫланӑ.

Хресченсене массӑллӑн колхоз ҫулӗ ҫине куҫармалли майсем тӑвас тесен, ҫӗршыва индустриализацилени, промышленность ялхуҫалӑхӗ валли тракторсемпе ытти машинӑсем парса тӑмалла туни кирлӗ пулнӑ.

ВКП(б) XV-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхне коллективизацилес ӗҫе вӑйлатасси ҫинчен решени йышӑнчӗ, колхозсен йышне малалла ӳстерме палӑртрӗ, ялхуҫалӑхне коллективизацилессишӗн кӗрешмелли ҫулйӗре кӑтартса пачӗ.

Пывӑр индустри никӗсне хывса ҫитернӗ хыҫҫӑн парти рабочи класпа хресченсене пӗрремӗш пилӗкҫуллӑха пурнӑҫлама мобилизацилет. Ялта та, хулари пекех, ӗҫ ҫӗкленӗвӗ пуҫланать, хресченсен массисем колхозсем тӑваҫҫӗ. Массӑллӑ колхоз юхӑмӗ уйрӑмах 1929 ҫул вӗҫӗнче вӑйланса ҫитет.

Партин XVI-мӗш конференцийӗ тата ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн 1929 ҫулхи ноябрьте пулса иртнӗ пленумӗ колхоз юхӑмне ҫирӗплетесси ҫинчен решенисем йышӑннӑ. Колхозсене кивҫен укҫатенкӗ тата машинӑсем парса пулӑшнӑ, МТС-сем тунӑ, вӗсем вара ялхуҫалӑхне коллективизацилес ӗҫре питех те пысӑк вырӑн йышӑннӑ.

Колхозсене массӑллӑн организацилеме хатӗрленес ӗҫре партипе правительство ялсенче ӗҫлеме 25 пин рабочие яма йышӑнни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Ҫав рабочисем хресчене организованно тата дисциплинӑллӑ пулма вӗрентнӗ, кулаксене хирӗҫ кӗрешме тата колхоз ҫулӗ пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулнине ӑнланса ҫитме пулӑшнӑ.

В. И. Ленин 1922 ҫулта партин XI-мӗш съездӗнче: вырӑс капитализмӗпе, вак хресчен хуҫалӑхӗнчен ӳссе тухакан капитализмпа юлашки тата татӑклӑ кӗрешӳ туса ирттересси умра тӑрать, тесе кӑтартса панӑ. 1929 ҫулта—аслӑ улшӑну ҫулӗнче — вырӑс капитализмне хирӗҫ юлашки тата татӑклӑ кӗрешӳ туса ирттермелли вӑхӑт ҫитнӗ.

1929 ҫулта колхозсемпе совхозсем пурӗ 400 миллион пӑт. вӑл шутран таварлӑ тӗштырӑ 130 миллион пӑт пухса илнӗ. Урӑхла каласан, 1929 ҫулта колхозсемпе совхозсем государствӑна 1927 ҫулта кулаксем панинчен ытларах тӗштырӑ панӑ. 1929 ҫулта, колхозсем туни усӑллӑ пулнине ӑнланса ҫитсе, вӑтам хресченсем массӑллӑн колхоза кӗме пуҫланӑ. Ҫавӑн чухне Ленин—Сталин партийӗ талккӑшпех колхозсем тунӑ никӗс ҫинче кулаксене пӗтерес задача кӑларса тӑратнӑ.

Кулаксем пӗтессине курса, сылтӑм оппортунистсем ялхуҫалӑхӗ каялла чакса пырасси ҫинчен кӑшкӑрашма тытӑннӑ. ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ сылтӑм оппортунистсен сӑтӑрла ӗҫне, вӗсем кулаксен агенчӗсем пулнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн 1929 ҫулхи ноябрьти пленумӗ: сылтӑм оппортунистсен шухӑшӗсене сарни большевиксен партийӗнче тӑрассипе килӗшме пултараймасть, тесе йышӑннӑ.

Троцкистсемпе бухаринецсем, киревсӗррӗн аркӑнтлансе, социализм строительстине чарса лартма, ҫӗнӗрен капитализмлӑ йӗркесем туса хума пулӑшакан ӗҫсем туса пынӑ. Ҫав сутӑнчӑксем ют ҫӗршыв разведкисен агенчӗсем, шпионсем, диверсантсем, ҫынвӗлеренсем пулса тӑнине парти ун чухне пӗлмен-ха. Каярахпа парти вӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Массӑллӑ колхоз юхӑмӗн малтанхи тапхӑрӗ парти хресченсен тӗп массине рабочи класс тавра пӗтӗҫтерессишӗн, кулаксемпе вӗсен агенчӗсене хирӗҫ вирлӗн кӗрешнипе палӑрса тӑрать. Кулаксем пур ҫӗрте те колхозсем тӑвассине хирӗҫ кӗрешнӗ, ҫак ӗҫре пур майсемпе те усӑ курнӑ. Кулаксем коммунистсене, комсомолецсене, совет работникӗсене, ялти активистсене вӗлернисем сахал мар пулнӑ. Кулаксем сӑтӑрла ӗҫсем нумай тунӑ, колхозсен производствӑллӑ-экономикӑллӑ базине пысӑк сиен кӳнӗ.

1929 ҫул вӗҫленнӗ тӗле хресченсем ялӗ-ялӗпе, районӗпе, округӗпе колхоза кӗме пуҫланӑ. «Талккӑшпех коллективизаци туни ял таврашӗнчи пӗтӗм ҫӗр колхозсен аллине куҫассине пӗлтернӗ, анчах ҫав ҫӗрӗн чылай пайӗ кулаксен аллинче пулнӑ,—ҫавӑнпа та хресченсем кулаксене ҫӗр ҫинчен хӑвала-хӑвала янӑ, раскулачивани тунӑ, выльӑх-чӗрлӗхсене, машинисене турта-турта илнӗ тата кулаксене арестлеме, вӗсене ялтан кӑларса яма совет влаҫӗнчен ыйтнӑ.

Талккӑшпех коллективизаци туни, ҫапла вара, кулаксене пӗтерессине пӗлтернӗ» («ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ», чӑвашла издани, 370 стр.).

«Ҫакӑ вӑл пит те пысӑк революциллӗ переворот пулнӑ, обществӑн кивӗ качествӑллӑ состояниинчен ҫӗнӗ качествӑллӑ состоянине сиксе куҫни пулнӑ, ҫак сикӗм хӑйӗн результачӗсемпе 1917 ҫулти Октябрьти революциллӗ переворотпа пӗр пекех пысӑк вырӑнта тӑнӑ» («ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ», 372 стр.).

Кулаксене класӗпех пӗтернӗ май, капитализма каялла таврӑнассин юлашки шанчӑкӗ ишӗлсе арканнӑ.

Анчах коллективизацин пысӑк ҫитӗнӗвӗсемпе пӗрлех, парти работникӗсен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем; колхоз строительствин политикине пӑснисем те палӑрнӑ.

Партин Центральнӑй Комитечӗ вырӑнсенче колхоз строительствин политикине пӑснӑ фактсем пулни ҫинчен пӗлсенех ҫав йӑнӑшсене тӳрлетес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем туса ирттернӗ. Сталин юлташӑн «Ҫитӗнӳсене пула пуҫ ҫаврӑнни» тата «Колхозник юлташсене панӑ ответ» ятлӑ статьисем колхозсем тӑвас ӗҫри йӑнӑшсене тӳрлетес тӗлӗшпе питех те пысӑк вырӑн йышӑннӑ. Ҫав статьясенче ялхуҫалӑх артелӗсем тӑвас вырӑнне коммунӑсем тупипе, хресченсене хӑйсен ирӗкӗпе ҫеҫ колхоза пӗрлештермелли ленинла принципа пӑснипе, тӗрлӗ районсенче колхозсем тумалли условисене шута илменнипе татӑклӑнах сивленӗ.

Сталин юлташ статьисене хресченсем пӗтӗм кӑмӑлтан ырласа йышӑннӑ, большевиксен партийӗн ҫулйӗрӗ «сулахай» оппортунистла йӑнӑшсемпе сыхӑнса тӑманнипе курса ӗненнӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех Сталин юлташ статьисем парти организацийӗсене коллективизаци политики тӗлӗшпе уҫӑмлӑ кӑтартусем панӑ, парти тӑшманӗсене, рабочи класс хресченсемпе союз тӑвассипе пӑсма, колхозсем тӑвас ӗҫе чарса тӑма хӑтланакансене, хыттӑн пырса ҫапнӑ.

Сталин юлташӑн аслӑ кӑтартӑвӗсемпе хӗҫпӑшалланса, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, парти 1930 ҫулхи ҫуракине ӑнӑҫлӑ ирттермелле турӗ. Колхозсен ытларах пайӗ колхозлӑ пӗрремӗш ҫуракине организованно ирттерчӗҫ. Тӗштырӑ акса тӑвакан тӗп районсенче 1930 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ тӗлне хресчен хуҫалӑхӗсен 40—50 проценчӗ колхозсене пӗрлешнӗ. Ҫавна май 1930 ҫулта ҫӗршыв валли хатӗрленӗ таварлӑ тӗштырӑн ҫуррине ытла колхозсем панӑ. Сталин юлташ каланӑ пек, ҫакӑ вӑл малашне ялхуҫалӑх кун-ҫулне уйрӑм харпӑрлӑхлӑ хресчен хуҫалӑхӗсем мар, колхозсемпе совхозсем татса парассине пӗлтернӗ.

ВКП(б) XVI-мӗш съезчӗ колхоз строительствишӗн парти виҫӗ ҫул хушши кӗрешнин итогне туса пачӗ. ВКП(б) XVI-мӗш съезчӗ пирӗн парти историйӗнче социализм пӗтӗм фрончӗпе тапӑнса пынӑ, кулаксем класс пулса тӑнине пӗтернӗ, талккӑшпех колхозсем тӑвассине пурнӑҫа кӗртнӗ съезд пулса юлчӗ.

Партин XVI-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисем историллӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ, вӗсем партие тата пӗтӗм совет халӑхне пирӗн ҫӗршывра социализм тӑвассишӗн малалла кӗрешме мобилизациленӗ.

Партин XVI-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисене анлӑн ӑнлантарса панӑ, политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатнӑ май хресченсем хушшинче колхоза кӗрекенсен шучӗ ҫӗнӗрен ӳсме пуҫланӑ. 1931 ҫул социализм строительствин пур участокӗсенче те чаплӑ ҫитӗнӳсем тунипе вӗҫленчӗ. Ҫӗршыври тӗштырӑ туса илекен пысӑкрах районсенче малтанхи ҫурҫул пӗтнӗ тӗле колхозсем тӑвас ӗҫ, тӗпрен илсен, вӗҫленнӗ. Колхозсем совхозсемпе пӗрле мӗнпур ҫурхи тырӑсен виҫӗ пайӗнчен икӗ пайне ытла акса хӑварнӑ. ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн 1931 ҫулхи пленумӗ ҫӗрӗҫӗнче колхозлӑ хресченсем тӗп фигура пулса тӑнине, ҫӗршыва тӗштырӑ ҫеҫ мар, техникӑллӑ культурӑсем те колхозсем парса тӑнине палӑртса хӑварнӑ.

1932 ҫул ялхуҫалӑхне социализмла улӑштарса ҫӗнетес ӗҫе вӗҫленӗ ҫулталӑк пулса тӑчӗ. Ҫав ҫул пирӗн ҫӗршыври ялхуҫалӑхлӑ районсенче пуринче те, тӗпрен илсен, колхозсем туса ҫитернӗ, капиталистла юлашки класа—кулаксене тӗппипех пӗтернӗ. Ҫав ҫул кулаксем колхозсене шалтан сиен кӳнине хирӗҫ парти татӑклӑн кӗрешнӗ, колхозсене организаципе хуҫалӑх енчен ҫирӗплетес ӗҫре пысӑк улшӑнусем тума пуҫланӑ ҫул пулнӑ. Колхозсене хӗсӗнсе кӗнӗ кулаксем тырӑ хатӗрлес ӗҫе юриех чарса тӑнӑ. Кулаксем обществӑллӑ пурлӑха ҫаратса колхозсене пысӑк сиен кӳнӗ. 1932 ҫулхи августӑн 7-мӗшӗнче Совет правительстви государство предприятийӗсен, колхозсен тата кооперацин пурлӑхӗсене сыхласа усрасси ҫинчен тата обществӑллӑ социализмлӑ харпӑрлӑха ҫирӗплетесси ҫинчен питех те кирлӗ закон йышӑннӑ. Ҫав закон тӑрӑх обществӑллӑ харпӑрлӑха ҫаратакансене халӑх тӑшманӗсем вырӑнне хурса айӑпламалла тунӑ. Ку закона тӳрӗ кӑмӑллӑ колхозниксем пурте пӗтӗм кӑмӑлтан ырласа йышӑннӑ.

Колхоз стройӗ ҫӗнтерни ялхуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫӗн формине, ялти партиллӗ ӗҫе урӑхлатса ҫӗнетме хушнӑ. Анчах вырӑнсенчи хӑшпӗр работниксем ялти ӗҫсен условийӗсем улшӑннине, класс тӑшманӗ хӑйӗн тактикине улӑштарнипе ӑнланса илеймен.

Сталин юлташ «Ялта ӗҫлесси ҫинчен» ятлӑ историллӗ сӑмахӗнче ялти партиллӗ ӗҫри ҫитменлӗхсене тарӑн сутӑтса пачӗ, колхоз стройне ҫирӗплетмелли ӗҫсене палӑртрӗ. Колхозсемпе ҫӗрӗҫ органӗсене унта хӗсӗнсе кӗнӗ кулаксенчен тата совет влаҫӗн тӑшманӗсенчен татӑклӑнах тасатмалла пулнӑ. Колхозсене большевикла кадрсемпе ҫирӗплетес ыйту питех те ҫивӗччӗн тухса тӑнӑ. Сталин юлташ пуҫарнипе 1933 ҫулта МТС-семпе совхозсем ҫумӗнче политотделсем тунӑ, парти работникӗсенчен колхозсене пулӑшма 17 пин, совхозсенчи политотделсене 8 пин большевика янӑ.

МТС-сем ҫумӗнче политотделсем туни колхоз строительствин аталанӑвӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланнине пӗлтернӗ. Политотделсем колхозлӑ хресченсен массине творчествӑллӑ ӗҫе хутшӑнтарнӑ. Политотделсем кӑткӑс задачӑна—агрономи наукин ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курса пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ҫитӗнтерес задачӑна пурнӑҫа кӗртме пулӑшнӑ.

Колхозник-ударниксен пӗрремӗш съездӗнче Сталин юлташ ҫывӑх вӑхӑтрах пур колхозсене те большевикла тӑвас, пур колхозниксене те пуян пурӑнакан тӑвас задача кӑларса тӑратрӗ. Сталин юлташ кӑтартӑвӗсем ялти ӗҫсыннисене колхоз стройне ҫирӗплетессишӗн тата чечеклентерессишӗн кӗрешме хавхалантарчӗҫ. МТС-сем ҫумӗнчи политотделсем колхозсене тӗреклетес задачӑна чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗҫ.

Пӗтӗм Союзри колхозник-ударниксен 1935 ҫулта пулса иртнӗ II-мӗш съезчӗ колхозлӑ хресченсемшӗн пысӑк событи пулса тӑчӗ. Съезд ялта колхоз стройӗ татӑклӑнах ҫӗнтернине палӑртрӗ тата ялхуҫалӑх артелӗн Сталинла Уставне йышӑннипе ҫав ҫӗнтерӗвӗн итогне турӗ. Партипе правительство колхоз стройне ҫирӗплетме кирлӗ ӗҫсене, государствӑпа колхозсен интересӗсене пӗр-пӗрипе килӗштерсе вӗсне ҫитичченех пурнӑҫа кӗртсе пычӗҫ. 1939 ҫулта колхозсен ҫӗрне салатасран сыхлас тӗлӗшпе паха ӗҫ туса ирттернӗ—государство ҫӗре акт тӑрӑх колхозсене ӗмӗрлӗхе ҫирӗплетсе пачӗ. Партипе правительство 1947 ҫулта «Колхозсенче ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑснисене пӗтермелли ӗҫсем ҫинчен» йышӑннӑ постановленипе колхозсен обществӑллӑ ҫӗрӗсене салатнине, ӗҫкунӗсене тӗрӗс мар расходланипе пӗтерме кирлине тепӗр хут кӑтартса пачӗҫ. Ялхуҫалӑх артелӗн Уставне тӗрӗс пурнӑҫланине асӑрхаса тӑма, колхоз строительствин ытӑвӗсене татса пама Сталин юлташ пуҫарнипе СССР правительстви ҫумӗнче колхозсем енӗпе ӗҫлекен Совет тунӑ.

Большевиксен партийӗпе Совет правительстви колхозсенче ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн тата ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетессишӗн яланах тимлӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн 1947 ҫулхи февральти пленумӗ «Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра ялхуҫалӑхне ҫӗклемелли ӗҫсем ҫинчен» йышӑннӑ постановлени тата СССР Министрӗсен Совечӗ 1948 ҫулта «Колхозсенче ӗҫе организацилессипе лайӑхлатмалли, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелли тата ӗҫшӗн тӳлессине йӗркелемелли майсем ҫинчен» йышӑннӑ постановлени колхозсен пурнӑҫӗнче питех те кирлӗ ӗҫ пулса тӑчӗҫ.

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн февральти пленумӗ йышӑннӑ историллӗ постановлени колхозлӑ хресченсемшӗн вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче ялхуҫалӑхне юсаса малалла аталантарассишӗн кӗрешмелли программа пулса тӑчӗ. Пирӗн ҫӗршыв юлашки ҫулсенче ҫуллен ҫичӗ миллиард пӑт тӗштырӑ пухса илни ҫав историллӗ постановление пурнӑҫланин результачӗсенчен пӗри пулса тӑрать.

Колхоз строительстви пирӗн ҫӗршывра Совет государстви пулӑшнипе ӳссе тӗреклентӗ. Ленин—Сталин партийӗ вӗрентсе ӳстернӗ колхозлӑ хресченсем халӗ совет ҫӗршывӗн хӑватлӑ вӑйӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Сталинла пилӗкҫуллӑхсем вӑхӑтӗнче колхоз стройӗ никам ҫӗнтереймен вӑй пулса ӳссе ҫитӗнчӗ. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫре колхозсем историллӗ вырӑн йышӑнчӗҫ Ҫакӑ пирӗн парти, Сталин юлташ кӑтартса панӑ тӑрӑх ҫӗршыва индустриализацилемелли, ялхуҫалӑхне коллективизацилемелли ҫул пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулнине тепӗр хут уҫҫӑн ҫирӗплетсе кӑтартрӗ.

Ҫутҫанталӑка улӑштарса ҫӗнетмелли сталинла плана пурнӑҫлани социализмлӑ ялхуҫалӑхӗн аталанӑвӗнчи ҫӗнӗ тапхӑр пулса тӑрать. Тӗнчери чи пысӑк гидроэлектростанцисемпе каналсене туни ҫӗрӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗҫне тата ытларах вӑйлатма май парать.

Пирӗн ҫӗршывра колхоз стройӗ ҫӗнтерни пӗтӗм тӗнчипе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Халӑх демократи ҫӗршывӗсенче Совет Союзӗнчи колхоз строительствин опычӗпе халӗ анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Совет Союзӗ тӑванла пулӑшнипе вӗсем ялхуҫалӑхне социализмлӑ ҫулпа аталантарас задачӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлӗҫ.

Пирӗн социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче пысӑк ҫитӗнӳсем туни—вӑл капитализмлӑ ялхуҫалӑхӗнчен лайӑх пулнине кӑтартса парать. Америкӑра ҫӗршер пин фермерсем юхӑнса, чухӑнланса пыраҫҫӗ, ӗлӗк тырпул лайӑх ӳснӗ ҫӗрсем халӗ пушӑ выртаҫҫӗ. Пирӗн колхозлӑ ялхуҫалӑхӗ ҫӗршывра апат-ҫимӗҫ ытлӑн-ҫитлӗн тӑвас, социализмран коммунизма куҫмалли условисем хатӗрлес задачӑна пурнӑҫласа пырать.

Пирӗн ҫӗршывӑн социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ пысӑк ҫитӗнӳсем туни—большевиксен партийӗ, рабочи класс, колхозлӑ хресченсен нумай миллионлӑ масси колхоз строительствин сталинла политикине тӗрӗс пурнӑҫлассишӗн нумай ҫулсем хушши тӑрӑшса ӗҫленин итогӗ пулса тӑрать.

Е. СЕМЕНОВ.

Чăваш АССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне тултарни çинчен

Чăваш АССР Статистика управленийĕ пĕлтерни

I.

Чăваш АССР-ĕнчи промышленность 1951 çулта продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшпе 106 процент тултарнă.

1950 çулхипе танлаштарсан, 1951 çулта 18 процент ытларах продукци туса кăларнă.

1951 çулхи IV-мĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмĕшпе 109 процент тултарнă.

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăм министерствăсемпе ведомствăсем тата союзлă министерствăсемпе РСФСР министерствисене пăхăнса тăракан предприятисем енĕпе плана çакăн чухлĕ тултарнă:

	1951 çулхи плана тултарнă (процентпа)
Союзлă министерствăсемпе ведомствăсене пăхăнса тăракан предприятисем	107
РСФСР министерствисемпе ведомствисене пăхăнса тăракан предприятисем	108
Вăл шутран:	
«Чăвашвăрман» трест	108
«Чăвашлесдрев» трест	107
Аш-какай тресчĕ	114
Çăкăр тресчĕ	108
Сĕт-çу тресчĕ	85
Чăваш АССР министерствисемпе ведомствисем	102
Вăл шутран:	
Вырăнти промышленность министерстви	106
а) Çăмăл промышленность предприятийĕсем	97
б) Вырăнти промышленность предприятийĕсем	119
Вăл шутран: районсемпе хуласенчи промкомбинатсем	121
Апат-çимĕç промышленность министерстви	100,2
Вăл шутран: районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсем	108
Вырăнти топливо промышленность управленийĕ	109
Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕ	115
Полиграфи промышленноçĕпе издательствăсен тата кĕнеке суту-илĕвĕн управленийĕ	103
Коммунальнăй хуçалăх министерстви	98
Промысла кооперацийĕ тата инвалидсен кооперацийĕ	103
Вăл шутран:	
Чăвашпромсовет	107
а) Промсоюз	105
б) Швейпромсоюз	108
Вăрман кооперацийĕ	97
а) Древпромсоюз	94
б) Тарпромсоюз	101
Чăвашкоопинсоюз	124

Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерстви (районсемпе хуласенчи промкомбинатсем енĕпе), Апат-çимĕç промышленность министерстви (районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсем енĕпе), Вырăнти топливо промышленность управленийĕ, Чăвашпромсовет, Чăваштарпромсоюз тата Чăвашкоопинсоюз 1951 çулта продукци туса кăлармалли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, тултарнă пулин те, хăшпĕр чи кирлĕ йышши изделисем туса кăлармалли плана тултарайман. Сăмахран, райпромкомбинатсем строительство материалĕсем—кирпĕч, черепица, известь тата урапа, пĕкĕ, батка-пичке, хăма, сĕтел-пукан, çавăн пекех куллен кирлĕ чылай ытти изделисем туса кăлармалли плана тултарман. Районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем çăкăрпа булка, варени, джем, патока, брага, типĕтнĕ тата тăварланă пахча çимĕç туса хатĕрлемелли плана тултарман. Вырăнти топливо промышленность управленийĕ йывăç турттарса кăлармалли плана тултарман. Чăвашпромсовет кирпĕч, черепица, известь, атă-пушмак, вĕрен-пăяв т. ыт. те туса кăлармалли плана тултарман.

II.

1951 çулта продукци туса кăлармалли плана çак предприятисем тултарнă:

	1951 çулхи плана тултарнă (процентпа)
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод (директорĕ Якунин)	112
Канашри вагонсем юсакан завод (начальникĕ Трухин)	103
Улатăрти пăравуссем юсакан завод (начальникĕ Соколов)	105
Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ (директорĕ Синельников)	119
Куславккари çуртсем тăвакан завод (директорĕ Шейнман)	107
Вăрнар завочĕ (директорĕ Чуприн)	107
Çĕмĕрлери «Большевик» завод (директорĕ Лузин)	115
Шупашкарти ликерпа эрех завочĕ (директорĕ Камбур)	102
Етĕрнери спирт завочĕ (директорĕ Василенко)	102
Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕ (директорĕ Плотников)	100,1
Улатăрти махорка фабрики (директорĕ Мясник)	113
Шупашкарти пир-авăр фабрики (директорĕ Бекренев)	110
Сĕнтĕрти пир-авăр фабрики (директорĕ Хорошина)	111
Шупашкарти чăлха фабрики (директорĕ Кузьмин)	107
Атăл леш енчи торф предприятийĕ (директорĕ Грибов)	164
Шупашкарти хĕрлĕ эрех комбиначĕ (директорĕ Фомичев)	119
Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ (директорĕ Семенов)	117
Етĕрнери çу завочĕ (директорĕ Смоленцев)	106
Шупашкарти кондитерски фабрика (директорĕ Ковалева)	100,8
Шупашкарти макарон фабрики (директорĕ Иванов)	121
Шупашкарти кирпĕч завочĕ (директорĕ Горюнов)	136
Атăл леш енчи электростанци (директорĕ Каменецкий)	112
«Волгохимлес» трест (управляющийĕ Жикин)	112

1951 çулхи плана çавăн пекех Çĕктерти вăрман комбиначĕ, Çăмăл промышленность министерствин Шупашкарти механизациленĕ вăрман пункчĕ, Кирери рыблеспромкомбинат, «Торгплодоовощь» трест, «Союзплодотара» кантурĕ, Шупашкарти лентăсем тĕртекен фабрика, Элĕк сÿс-кантăр завочĕ, Пăрачкаври тата Миренкăри йĕтĕн завочĕсем, Шупашкарти тараса юсакан завод, Шупашкарти 1-мĕшпе 2-мĕш тата Канашпа Çĕмĕрлери тумтир çĕлекен индпошив мастерскойĕсем, Шупашкарти сăра завочĕ, Улатăрти, Çĕмĕрлери тата Канашри кирпĕч завочĕсем, Куславккари известь хĕртекен завод тата ытти предприятисем те тултарнă.

Уйрăм предприятисем, 1951 çулхи плана пĕтĕмĕшпе тултарнă пулин те, чи кирлĕ изделисем енĕпе плана тултарман. Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан завод—вагон юсамалли, Шупашкарти тир-сăран комбиначĕ—арçынсем валли хромран ботинка çĕлемелли, Шупашкарти лентăсем тĕртсе кăларакан фабрика—пĕр йышши тесьма тĕртсе кăлармалли, Элĕк сÿс-кантăр завочĕ—вăрăм сÿс-кантăр тумалли, Шупашкарти тумтир çĕлекен 1-мĕш индпошив мастерскойĕ—арçынсем валли хĕллехи пальто тата костюм çĕлемелли плана тултарман.

III.

1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, çулталăкри производство планне тултарман предприятисен хисепĕ чакнă. Анчах апла пулин те уйрăм предприятисем государство планне тултарман. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрринчи суловерфь, Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан «Комбайндеталь» завод, Сосновски завод, Çĕрпÿри пир-авăр фабрики, Вăрмарти сĕтел-пукан фабрики, Долгополянăри хăма çуракан завод, Улатăрти атă-пушмак фабрики, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрики, Улатăрти тумтир çĕлекен индпошив мастерскойĕ, крахмал тресчĕ, Ивановăри кирпĕч завочĕ 1951 çулхи плана тултарман.

Çулталăкри плана «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан 4 предприяти, Вырăнти топливо промышленность управленине пăхăнса тăракан 10 предприяти, Чăвашпромсовета пăхăнса тăракан 17 промартель, Тарпромсоюза пăхăнса тăракан 13 промартель т. ыт. те тултарман.

IV.

1951 çулта уйрăм изделисем туса кăлармалли плана çакăн чухлĕ тултарнă:

	1951 çулхи плана тултарнă (процентпа)
Ĕçе юрăхлă йывăç турттарса кăларнă	107
Хăма çурнă	94
Известь хĕртсе кăларнă	94
Хĕртнĕ кирпĕч туса кăларнă	99,4
Хĕртнĕ черепица туса кăларнă	34,5
Электроэнерги туса кăларнă	97
Торф хатĕрленĕ	125
Вагонсем юсанă	94
Пăравуссем юсанă	100,6
Стандартлă çуртсем	107
Юман экстракчĕ	112
Пир-авăр	99,9
Чăлха изделийĕсем	111
Трикотаж изделийĕсем	155
Сăран атă пушмак	95
Çăматă	97
Çănăх	108
Аш-какай	100,4
Колбаса	123
Вылăх çăвĕ	86
Пулă тытнă	77
Кондитерски изделисем	106
Макарон йышши изделисем	116
Çăкăрпа булка	108
Патока	71
Типĕтнĕ крахмал	58
Эрехсем	104
Хĕрлĕ эрехсем	111
Сăра	116
Тутлă шывсем	102
Махорка	112
Çуна	140
Урапа	93
Пуканпа кресла	106
Сĕтел	89
Шкаф	108
Диванпа кушетка	120
Йĕлтĕр	119
Чăпта	136
Тĕрлесе тунă илемлĕ япаласем	124

V.

1951 çулта ваккăн тăвакан суту-илÿри тавар çаврăнăш планне 95 процент тултарнă, вăл шутран:

Вырăнти торгсем	93
Вăрман промышленность министерствин УРС-ĕ	103
Чăвашпотребсоюз	94

1951 çулта столовăйсемпе ресторансенче апат çитермелли плана 101 процент тултарнă, вăл шутран:

Шупашкарти столовăйсемпе ресторансен тата кафе тресчĕ	108
Чăвашторг	103
Вăрман промышленность министерствин УРС-ĕ	126
Чăвашпотребсоюз	96

ЧĂВАШ АССР СТАТИСТИКА УПРАВЛЕНИЙĔ.

„Чăваш Коммуни“ хаçатра çырнă хыççăн

„Вăрман хатĕрлевĕнчи чăрмавсене пĕтермелле“

«Чăваш Коммуни» хаçатра 1951 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче «Вăрман хатĕрлевĕнчи чăрмавсене пĕтермелле» ятлă çыру пичетленсе тухрĕ. Буински вăрманпромхоз директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Голубев юлташ çырура çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани, çав çырăва инженерсемпе техниксен, мастерсемпе бригадирсен канашлăвĕнче, партбюро ларăвĕнче сÿтсе явни çинчен тата чăрмавсене пĕтерме мĕнле мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Колхозниксем хатĕрленĕ йывăçа куллен йышăнманшăн участокри мастера Земсков юлташа ятланă. Шайдулин приемщика эстутарнă.

Колхозниксене ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшас тесе, участокри инженерсемпе техниксене тата мастерсене бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Декабрĕн 14-мĕшĕнче 16-мĕш кварталта котлопункт ĕçлеме пуçланă. Ĕç укçи , парас ĕçе йĕркеленĕ. Кармалински поселокра тата 16-мĕш кварталта хĕрлĕ кĕтессем уçнă. Унта радио, хаçатсем, патефонсем, хут купăссем т. ыт. те пур. Калаçусемпе докладсем тăтăшах ирттерессĕ, кино картинăсем кăтартассĕ. Магазин ĕçне йĕркеленĕ. Лашасем валли сĕлĕ пама Кармалински участокра склад уçма йышăннă.

ЫЙТУСЕМПЕ ОТВЕТСЕМ

Чей кăмпи шывĕн сиплĕхĕ çинчен

Чылай çынсем «тинĕс кăмпи» («морской гриб») шывне ĕçсе пурăнаççĕ, вăл усăллă, теççĕ. Çак кăмпа шывĕ çынна чăнах та усăллă-ши? — тесе ыйтать А. Егоров юлташ (Ишлей районĕ).

«Тинĕс кăмпине» урăхла чей кăмпи теççĕ. Унăн сиплĕхĕ çинчен халăх чылайранпа пĕлет. Халăх хушшинче нумай чир-чĕртен сывалнă чухне çак кăмпа шывĕпе усă кураççĕ. Чей кăмпине пирĕн çĕршыва Российăпа Япони хушшинчи вăрçă хыççăн Маньчжурирен илсе килнĕ.

Çак кăмпа шывĕн сиплĕхне тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе, уйрăммăнах унăн биохими свойствине палăртас енĕпе чылай çынсем нумай çулсем хушши ĕçленĕ. Çак кăмпа шывĕ çинчен вырăс литературинче малтанхи хут 1923 çулта асăннă.

Хăшпĕр авторсем (Г. П. Высокос, И. В. Сабинская, т. ыт. те) 7 кун хушши лартнă чей кăмпи шывне ĕçни çынна усăллă пулнине палăртнă. Вăл уйрăмах грипп, ангина тата хăшпĕр вар-хырăм чирĕсенчен пулăшать. Чей кăмпине шывра 7—8 кун хушши тытсан, унта кăмпа микробĕсем нумай ĕрчеççĕ. Сын организмĕнче çак микробсем йышлăн сарăлса çынна чирлеттерекен сиенлĕ микробсене—стрептококксене, диплококксене хăваласа кăлараççĕ.

Хăшпĕр авторсем сăнаса тĕпченĕ тăрăх çакна палăртнă: чей кăмпи шывĕ пыр чирĕнчен стрептоцид ятлă эмелтен те лайăхрах сыватать. Ангинăпа чирленĕ чухне чей кăмпи шывне ĕçсен çын иккĕмĕш кунах сывалма тытăнать: пыр ыратни те, вĕриленесси те чакма пуçлать. Ангинăпа чирленĕ çынна чей кăмпи шывĕпе çапла эмелленме хушаççĕ: чей кăмпи шывне лартни 7 кунтан кая мар пулмалла. Çак шывпа кунне 10 хут таран çăвара чÿхемелле. Шыва çăварта ытларах (10—12 минутран кая мар) тытмалла.

Чей кăмпи шывĕ ăш чирĕсенчен те усăллă. Гастрит, хырăмлăх катарĕ пулсан, пĕрмаях варвиттипе аптăрасан, вархырăмра соляной кислота çителĕклĕ пулмасан, чей кăмпи шывне ĕçни пысăк пулăшу парать. Çак чирсемпе чирлекен çынсен чей кăмпи шывне кунне виçĕ хут апат умĕн икĕ сехет маларах çуршар стакан ĕçмелле.

Чей кăмпи шывĕ ал-урари пÿрлĕ-сурлă сурансенчен те сывалма пулăшать. Сурана çав шывпа час-часах çумалла.

Чей кăмпи шывне ахаль шыв вырăнне ĕçни те сиенлĕ мар. Хырăмлăх, пыршă язвипе, хырăмлăхăн кислăй катарĕпе чирлекен çынсене, пÿре чирĕпе аптăракан çынсене чей кăмпи шывне ĕçме хушмаççĕ.

П. ОСИПОВ,
Чăваш АССР Сывлăх министерствин главнăй терапевчĕ, медицина наукисен кандидачĕ.

Селĕп тата тытăнчăклă калаçакансене сыватасси

Совет медицини çултан çул пысăк çитĕнÿсем тăвать, малалла хăвăрт аталанса пырать. Совет медицини юлашки çулсенче селĕп тата тытăнчăклă калаçакансене сыватас ĕçре те паллă çитĕнÿсем турĕ.

Пуриншĕн те паллă: селĕп е тытăнчăклă калаçакансем пуринчен ытла ача-пăчасем хушшинче пулаççĕ. Калаçури çакăн пек çитменлĕхсем ачана вĕренÿре пысăк чăрмав кÿреççĕ. Ун пек ача тĕрĕс калаçма, тĕрĕс вулама пултараймасть, çавăнпа вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайми пулать.

Тытăнчăклă калаçни—йывăр чир. Ку чирĕн йывăрлăхĕ тĕрлĕрен пулать: хăшпĕрисем кăшт кăна тытăнса калаçаççĕ, теприсем пачах та калаçаймаççĕ.

Тытăнчăклă калаçасси тĕрлĕ сăлтавран килет: йывăр чир-чĕрсем тÿссе ирттерни, нерва системи пăсăлни, пĕчĕклех пысăк хуйăх тÿссе ирттерни, сасартăк хăраса ÿкни т. ыт. те. Кунсăр пуçне вăл чир чĕлхе-çăвар тавралĕнчи тĕрлĕ çитменлĕхсем пирки те пулма пултарать. Ку çеç те мар: ача тытăнчăклă калаçни ашшĕ-амăшĕсем мĕнле калаçнинчен те нумай килет. Пĕчĕк ача ашшĕ-амăшĕсем калаçни тăрăх калаçма вĕренет. Ашшĕ-амăшĕсем е аслăрах ачасем васкаса е тытăнчăклă калаççĕ пулсан вĕсенчен вĕренсе пыракан пĕчĕк ачасем те çавнашкалах калаçма вĕренсе пыраççĕ.

Юлашкинчен тепĕр сăлтава кăтартса пама кирлĕ вăл хăлха илтменни. Начар илтекен пĕчĕк ача вăхăтра тикĕс калаçма вĕренеймест, тепĕр чухне пачах калаçайми пулать, хăлхасăр та, чĕлхесĕр те тăрса юлма пултарать.

Калаçури кăлтăксем: тикĕс калаçманни, селĕп е тытăнчăклă калаçни т. ыт. те ачасен психологине те пăсма пултараççĕ. Тикĕс калаçайман ача хăйĕнчен хăй именме тытăнать, хăйĕн юлташĕсенчен ютшăнма пуçлать. Çавăнпа та кăлтăклă калаçакан ачасене тĕрĕс калаçма вĕрентме вăхăтра тытăнни—питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Çакă ачана пур енчен те йĕркеллĕ çитĕнме пулăшĕ.

Пирĕн çĕршывра ача поликлиникисем çумĕнче логопедически кабинетсем уçнă, унта селĕп тата тытăнчăклă калаçакан ачасене сыватаççĕ. Шупашкарти ача больници çумĕнче те халĕ логопедически кабинет уçнă.

Логопед М. ГЕНИНГ.

Хунавсем çинчен

(Редакцие килнĕ калавсемпе сăвăсене пăхса тухни)

Малтанах çакна калас пулать: «Хунав»—питĕ кăмăллă сăмах. Вăл çамрăклӑха пĕлтерет. Çамрăклăхра—вăй-хал. Сăмахăм—писатель пулма ĕмĕтленекен çамрăксем çинчен.

Юлашки 5—6 çул хушшинче, чăваш совет литературине çамрăксем сахал мар хутшăнчĕç. Вĕсен йышĕнче вулакансемшĕн паллăрах ятсем те пур ĕнтĕ. Вулакансем А. Артемьев, В. Садай, В. Урдаш калавĕсемпе повеçĕсене, Н. Евстафьев, Г. Ефимов, Г. Орлов сăввисене кăмăлласа йышăнчĕç, вĕсенчен паянхи çĕнĕ темăпа çырнă тата лайăхрах произведенисем кĕтеççĕ. Вулакансем хăйсен юратнă писателĕсенчен çĕнĕ япаласем кĕтни—çыраканшăн калама çук пысăк хисеп. Çакна çамрăк писательсен асра тытмалла.

Ятран асăннă юлташсемсĕр пуçне, çамрăксем пирĕн литературăра татах та нумай. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисем питĕ вăраххăн ÿсеççĕ е темиçе çул хушши ĕнтĕ пĕр вырăнтах тăраççĕ. «Эпир çыратпăр, анчах пичетлемеççĕ» теççĕ хăшпĕрисем. Ку тĕрĕс мар. Лайăх произведени куп куратех. Хăшпĕр çамрăксем пултарулăхне ÿстерсе пыраймаăни нимĕнрен те мар, чи малтан, хăйсем тăрăшса вĕренменнинчен, çине тăрса ĕçлеменнинчен килет. Паллах, вĕсене вăхăтра тивĕçлĕ пулăшу парайманни те çав сăлтавсем шутнех кĕрет. Çак юлташсемсĕр пуçне тата тин çырма тытăнакансем е çырма шухăшлакансем те нумай. Эпĕ ытларах кунта çав çамрăксем çинчен каласшăн.

Редакцие е писательсен Союзĕн Правленине çакнашкал çырусем килеççĕ: «Хисеплĕ юлташсем! Эпĕ кăçал пысăк роман çырма шухăшласа хутăм. Мĕнле канаш паратăр: çырас-и, çырас та мар-и?» «Эпĕ сăвăсем çырас, тетĕп. Эсир мана пулăшăр. Тен, чăваш халăх поэчĕ пулăп». «Ача чухне эпĕ калавсем çыраттăм. Халĕ (унтанпа пайтах çулсем иртсе кайсан) Сирĕп калавăрсене вуласа тухрăм та, хамăн та писатель пулас килсе кайрĕ» т. ыт. те. Çакнашкал çырусен авторĕсем, паллах, писателĕн йывăр ĕçне тивĕçлипе ăнланмаççĕ. Вĕсен çырăвĕсене (хирĕç хăйсене пĕлмен-палламан пирки) пим çырса яма аптрамалла. Çакпа çеç кăласа хăварас килет: ху суйласа илнĕ ĕçре (кирек мĕнле ĕçре те) пысăк пултарулăх кăтартма ĕмĕтленни—лайăх, анчах ĕмĕт кăна çителĕксĕр-ха, унсăр пуçне—нумай вĕренни, çирĕп хăнăху кирлĕ.

Çырма тытăнакан çамрăксенчен хаçат-журнал редакцисене тата час-часах çакăн пек» çырусем килеççĕ: «Манăн ĕçре çитменлĕхсем чылаях та пулĕ, анчах та, пĕрремĕш хут асапланнине кура, вăл (сăвă—А. А.) парăнасшăн мар-ха. Эсир пулăшнипе: тÿрлетсен, юсасан ăна пичете яма май пулмĕ-ши? А. Д.». Эпĕ çак çырăва илсе кăтартнипе унăн авторне кÿрентерессĕн мар. Сăвви унăн шухăш тĕлĕшпе япăх мар, илемлĕх енчен илсен питĕ «йăваш» пулнипе кăна пичете юрăхсăр-ха. Пулăшма ыйтни те тĕрĕс—вăл А. Д. юлташăн сăпайлăхне кăтартать. Анчах вăл «пулăшу» сăмаха ăнлансах кайманни çинчен каласа хăварасах пулать.

Хăвăн сăввуна е калавна редакцинче ĕçлекен юлташсем тÿрлетессе, юсасса шанни—хăвăншăнах сиенлĕ. Пĕр-пĕр пĕчĕк заметкăна, фактсене хăварса, чĕлхе тĕлĕшпе юсаса, пичетлесе кăларма пулать, анчах урăх çын çырнă илемлĕ произведение, унта «çитменлĕхсем чылаях пулсан», тÿрлетме, юсама (авторсăр пуçне) питех те хĕн.

Акă, П. Е. юлташăн «Бригада вăрманта» сăввин малтанхи строфи:

Сутă ир. Хĕвел тухман-ха,
Анчах вăрман сар тумпала.
Пур йывăç та çулçă тăкман-ха,
Кĕркунне, инçе мар хĕл пулмалла.

Илер-ха тата И. А. юлташăн «Пысăк юрату» ятлă пĕр пысăк калавĕнчен çак йĕркесене:

«Ку письмова ала тытса вулани пĕр ерне те иртрĕ, письмова илсĕ адрĕсне пĕлсепех письмо та ячĕ, анчах та калех чĕре чăтаймасть, письмова ала илсе...».

Асăннă сăвăпа калава урăх çын тÿрлетсе тухма пултараймасть. Вĕсене çĕнĕрен çырмалла.

Çапла ĕнтĕ, тÿрлетсе юсани—пулăшу мар. Пулăшу—тăрăшса вĕрентнинче, çитменлĕхсене вăхăтра та тĕрĕс кăтартса панинче.

Малалла—вĕрентесси тата вĕренесси çинчен.

Редакцие вăтам шкулта вĕренекенсем хăйсен малтанхи сăввисемпе калавĕсене чылай ярса параççĕ. Акă, умра икĕ сăвă. Иккĕшне те 9-мĕш класра вĕренекенсем çырнă. Пĕри çапла тытăнать: «Астăватпăр манмап-ха эпир ултавçă нимĕç фашисчĕсем. Пирĕн çине тискерле тапăнса, çĕршыва сиен кÿнине». Тепри: «Пуля айне вăл пулман: Таçта та пултарнă çав ача—юрать, тенĕ яланах хăйне аслисем хушсан». Эпĕ хăйсем пекех, пĕр пăнчă улăштармасăр, çыртăм.

Мĕн калас? Ку сăвăсене те никам та «юсас, тÿрлетес» çук.

Çырма шутлакан çамрăкăн вĕренÿ çулĕ аслă. Чи малтанах—шкул, пурнăç, литература, унăн историйĕ, унăн теорийĕпе практики. Литература жанрĕсене, литература меслетне, унăн хăйне кăна тивĕç тĕрлĕ енĕсене çамрăксем шкулта вĕренеççĕ. Литературăпа интересленекенсемшĕн шкулсенче литература кружокĕсем пур. Сăвă е калав çырсан, юлташсене, учителе кăтартма, унтан литература кружокĕнче пăхса тухма пулать. Произведени пулса çитнине хăв чăн-чăнах ĕненсен, пĕр-пĕр редакцине е писатель патне ярса пăхма пулать.

Çырма тытăнакансенчен пултаруллă çамрăксем те сахал мар пирĕн. Эпĕ нумай пулмасть И. Игнатьевăн «Председатель» ятлă калавне вуласа тухрăм. Вăл—критикăпа самокритика çинчен. Пĕр ялти колхозниксем юнашар колхоза кайса килеççĕ те, унти лайăх ĕçсем çинчен хăйсен колхоз председательне тĕртсе каласа параççĕ. Калава вĕçне çитмесĕр вулама пăрахаймастăн. Чĕлхе те аван. Акă пĕр тĕслĕх: «Вăл вĕрепессе те мала хуратчĕ, ыттисем пек мар... Эсĕ сăмах калама тытăнсан, ан кÿрен те-ха, темскер... Те эс сăмах калатăн, те сан сăмахусем çавăн пек урлă-пирлĕ çапăнса сике-сике тухаççĕ. Нимĕн те ăнланса илейместĕп... Васли мĕпле́чĕ? Вăл калама тытăнсан, вунă çулхи ача ăнланĕ!» Яка, тĕрĕс, ăнланмалла, ĕненмелле калаçтарать автор вăтă çынна. Калавĕ композици енчен те чиперех йĕркеленсе пырать. Автор малашне тата ăнăçлăн ĕçлеме пултарасси сисĕнет.

Анчах калавăн пĕр çитменлĕх пур. Хальхи пĕрлештернĕ пысăк колхозăн пултаруллă председателĕ малтан пĕр пĕчĕк колхозра начар ĕçленĕ пулнă. Вулакана умне тÿрех «мĕншĕн?» ыйту сиксе тухать. Çакна автор ĕнентермелле кăтартса параймаан. Калава пичетлеме юрăхлă туса çитерес пулсан, авторăн тата ĕçлемелле.

«Ялав» журнала пĕр сиктермесĕр вуласа пыракансем Г. Лисин сăввисене курнă пулĕ. Г. Лисин—çамрăк автор. Начарах та çырмасть. Анчах ăна, пултарулăхне ÿстерме сунса, çакна асăрхаттарас пулать. Поэтăн пултарулăхĕ нумай çырса тултарнинче мар—сăвăсенче кашни сăмаха лайăх шăратса кăларнинче. «Çĕнĕ çул эпиграммисем» сăввинче Г. Лисин çапла çырать:

Вăл—пуштă йăвăçĕ хăех,
Пĕр чĕлхерен теприн патне
Леççе парать çаплипелех
Пихçан вилми шухăшсене.

Хăста куçаракан çинчен кунта хăста калапă. Пĕтĕмĕшпех пулса çитнĕ строфа ку. Анчах çак сăвăрах тата çапла калани те пур:

Уп ăсĕн вичкĕн çуттинче
Епле курайман çак ĕçе?

Ку йĕркесене ăнланма йывăр. Е тата «Мир—тĕпчене» сăввинче:

Халăхсем, пĕр рете пĕрлешер,
Сумма-çуммăн тăрса кĕрешер:
Чечекри садсене тепĕр хут
Ан çунтартăр вутпа çичĕ ют...
Пирĕн шанчăк девиз та тупа.

Автор хăй шухăшне аван каласа панă. Анчах сăвă йĕркисене шăратсах çитереймен. «Пĕр рете пĕрлешер»—вулама йывăр, «девиз та тупа»—«татупа» илтĕнет.

Çавăн пекех В. Константиновăн «Вăрманта» сăввинче:

Юмансем пĕр чарăнмасăр
Кĕрĕс-кĕрĕс ÿкнипе
Кисренет вăрман тăр та тăр
Сутă кунăн тăршшипе.—тесе çырса каять. «Тăр та тăр» тени строфана пăсса хурать, «сутă» сăмах ытлашши кунта. Çапла вара, хăш чухне лайăх сăввах пĕр строфа е пĕр йĕркех пăсса пăрахать. Ăна урăх çын юсама, тÿрлетме пултараймасть. Авторăн хăйĕн туса çитермелле. Г. Лисинăн та, В. Константиновăн та васкас йăла пур. Вĕсен малашне çакна шута илес пулать.

Н. Мартынов сăввисене вулакансем пĕлмеççĕ-ха.

Вĕçтереççĕ вĕсем юр пек çăмăл,
Коньки тĕпĕ пăра чăр! чĕрет.
Кайăк пек сĕкленет çамрăк кăмăл,
Савăнать вĕри юнлă чĕре.

Сăвăсене çакăн пек çырма пултаракан çамрăк пирки, паллах, шанчăклă сăмах каласах килет.

Нумай пулмасть унăн «Хĕллехи ÿкерчĕк» ятлă сăвăсен ярăмпе вуласа тухрăм. «Пĕве çинче», «Шофер», «Çул çинче» сăввисем килĕшрĕç.

Тÿпе янкăр, тăрă,
Сивĕ хĕл умра.
Вĕçтерет çул тăрăх
Чăрсăр çил юра.

Шофер, шартлама сивве пăхмасть, вăл хăй машинипе савнийĕ патне васкать, ун чунĕ юрату юрри юрлать, ун чĕринче — çуркунне. Сын кăмăлне сутă та ырă, ăшă сăмахсемпе каласа пама пултарнă. Анчах автор яланах тенĕ пек пĕр сăнсемпе усă курать-ха (Шурă пир, шурă шупăр т. ыт. те) е пĕр сăвăрах пĕр евĕр рифмăсем нумай унăн. Н. Мартынов юптарусем те çырать. Анчах вĕсенче вăл шухăш сивĕчлĕхне туптаса çитерейместь-ха. Юптару—пирĕн поэзире питĕ кирлĕ жанр, вăл çитес вăхăтра хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнмаллах. Çакă пархатарлă ĕçе тăвасса эпир çамрăксенчен кĕтетпĕр.

Çамрăксем çыракан сăвăсенчи, калавсенчи шухăшсем савăнтараççĕ пире. Вĕсем Совет çĕршывĕнчи телейлĕ пурнăç çинчен, совет çыннисен кĕрешÿпе ĕçри хастарлăхĕ çинчен, ÿссе çитĕнсе пыракан хуласемпе ялсем çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен çыраççĕ. Ку—çамрăксен ÿсĕмĕ çинчен, вĕсем пĕтĕм халăх интересĕпе пĕрле ÿссе çитĕнни çинчен калать.

Совет çĕршывĕнче пурăнакан çамрăксем телейлĕ. Капитализмлă çĕршывсенчи пек ыранхи куншăн, вĕренмесĕр е ĕçсĕр юласса хăрушлăх çук вĕсен. Совет çамрăкĕсем умĕнче—усă çул. Вăл—коммунизм çулĕ. Çакна вĕсем лайăх ăнланаççĕ. Ăнланнă пирки, кашниех хăйсен пултарулăхне кăтартма, Тăван çĕршывпа тăван халăха ытларах усă кÿме тăрăшаççĕ. Çĕршывпа халăхăн тивĕçлĕ ывăлĕ пулас тесен, вĕсене чунтан парăннисĕр пуçне, ху ĕçлекен ĕçе ăста тума пĕлни кирлĕ. Литература ĕçĕнче те çавах. Çамрăк писательсем хăйсен ăсталăхне ÿстерсе çитĕнсе пырасса пирĕн халăх ĕненсе тăрать.

Александр АЛГА.

Тĕнчери халăхсем В. И. Ленина хисеплесе асăнаççĕ

БОЛГАРИ

СОФИЯ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгарири пĕтĕм халăх аслă Ленина хисеплесе асăнать. В. И Ленина асăнса хуласемпе ялсенче ĕççыннисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕсене иртереççĕ. Софийри урамсенче, правительство çурчĕсем тата обществăллă çуртсем умĕнче—В. И. Ленин портречĕсем, хурлăхлă ялавсем.

«Работническо дело» хаçат «Ленинизмăн никам çĕнтерейми ялавĕ айĕнче» ятлă умстатьяра XX-мĕш ĕмĕр Ленинпа Сталин идейисем хăватлă сарăлнă ĕмĕр пулнине палăртать.

Малалла хаçат çапла çырать: Совет Союзĕнче истори чи кĕске срокра социализм туса хунă, халĕ тата пысăкрах хăвăртлăхсемпе коммунизмлă общество туса пыраççĕ. Ленинпа Сталин туса хунă большевикла аслă парти пархатарлă ĕçĕ вăл—чи хăюллă творчествăллă ĕçсем туни, этемлĕхĕн ăс-тăнĕн вăйне тата халăхăн творчествăллă генийне чунтан-чĕререн ĕненсе тăни, çыншăн телейлĕ пурнăç тăвассишĕн, халăхсем хушшинчи мирпе туслăхшăн тăрăшмалли чи пархатарлă идейăсем.

Ленинизм чаплă çĕнтерÿ туни вăл Европăри халăх демократи çĕршывĕсенчи 70 миллион ĕççыннисем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăнхи çулсенче, коммунистсен партийĕсемпе рабочи партисем ертсе пынипе, Совет Союзĕ тăванла пулăшса тăнипе, хуçалăхпа культура строительстввинче чаплă çитĕнÿсем туни пулса тăрать.

Болгари халăхĕ, прогрессивлă мĕнпур этемлĕхпе пĕрле, В. И. Ленина тав тăвать. Генилле учитель тата çулпуç пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхе ирĕклĕх, мирпе телей патне çитмелли çул кăтартса панă. Болгари халăхĕ Ленинăн генилле ĕçне малалла туса пыракан аслă И. В. Сталина тав тăвать. Ленинпа Сталин ĕçĕ пире фашизмран хăтарчĕ, пирĕн халăха империализмлă чуралăхран ирĕке кăларчĕ. Çĕнĕ материальлă тата духовлă культура строительстввинчи хамăрăн мĕнпур çитĕнÿсене эпир пирĕн парти—ленинизмăн идейăллă тата организациллĕ принципĕсемпе хĕçпăшалланнă коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тума пултартăмăр. Пирĕн социализмлă тăван çĕршыв умне малашнехи ырă пурнăç çуттисем тухса тăчĕç. Çавна эпир Октябрьти Социализмлă Аслă революци ĕçне, большевиксен аслă партине тата ăна тăваканĕсене—Ленинпа Сталина ĕненсе тănипе тума пултартăмăр.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх паян ĕççыннисен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине паллă тăвать. Пур çĕрте те хурлăхлă-чаплă пухусемпе митингсем пулса иртеççĕ. Пухусемпе митингсенче пролетариатăн генилле çулпуçĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсем туса параççĕ. Республикăри кинотеатрсенче Совет Союзĕнче В. И. Ленин çинчен ÿкернĕ документлă тата илемлĕ фильмсене кăтартаççĕ.

Ĕнер Берлинра, Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи пуçарнипе, В. И. Ленина асăнса Берлинри халăхăн «туслăх воскресникне» ирттернĕ. Берлинра пурăнакансем Германи столицине юсама пулăшаççĕ. Строительствăсен нумай площадкисене тата аркатнă çуртсен тасатнă çĕрти вырăнсене В И Ленин портречĕсемпе, Хĕрлĕ ялавсемпе, Демократиллĕ Германи Республикин ялавĕсемпе, Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн эмблемисемпе, лозунгсем çырнă транспарантсемпе илемлетнĕ. Воскресника Берлинăн обер-бургомистрĕ, Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин председателĕ Фридрих Эберт, ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăх министрĕ Пауль Шольц, информаци ведомствин руководителĕ Герхард Эйслер профессор тата политикăпа обществăллă организацисен ытти представителĕсем хутшăннă.

КИТАЙ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ПЕКИН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Китайăн центрти тата провинцисенчи хаçачĕсем В. И. Ленин вилнĕренпе 28 çул çитнине анлă палăртаççĕ. «Женьминьжибао» хаçат умстатьяра çапла çырать: пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем аслă Ленинăн произведенийĕсене тĕплĕ вĕренеççĕ, çав произведенисем революци компасĕ пулса тăраççĕ, халăхсене ирĕке кăлармалли çула кăтартса пăраççĕ. Китайри коммунистсен партийĕ, большевиксен партийĕнчен вĕренсе, империализма, феодализма тата бюрократла капитала хирĕç нумай çул хушши пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе кĕрешсе пычĕ.

Китайри рабочи класс, пĕтĕм Китай халăхĕ пекех, тесе çырать хаçат, Китай халăхĕн çĕнтерÿпе вĕçленнĕ кĕрешĕвĕ аслă Ленин ячĕпе тачă çыхăнса тăнине пĕлет. Халĕ производствăна вăйлатассишĕн, материалсене перекетлессишĕн кĕрешекен, пурлăхпа укçана тирпейсĕр тăкакланипе бюрократизма хирĕç кĕрешекен Китай халăхĕ В. И. Ленинăн ĕçĕсем пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕлет.

Çав кĕрешÿре çĕнтерсе пыма Китай халăхĕ Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕнчен вăй-хăват илсе тăрать, тесе çырать хаçат.

Паян «Гуанминжибао» хаçат Ленин кунĕсем çинчен çырнă чылай материалсене пичетленĕ.

«Тяньцзиньжибао» хаçат Ленин фотоÿкерчĕкĕсене, çăмахран, В И. Ленин портретне, «В. И. Ленинпа И В. Сталин Горкăра» ятлă картинăн, «Сталин юлташпа Ленин Таммерфорсра тĕл пулни» ятлă картинăн ÿкерчĕкĕсене пичетленĕ. Совет Союзĕнчи художниксем Налбандян, Басов тата ыттисем те ÿкернĕ «Власть Советсене—мир халăхсене» ятлă картинăн пысăк ÿкерчĕкне пичетлесе кăларнă.

Пекинри пысăк кинотеатрсенче «Ленин в Октябре» тата «Ленин в 1918 году» кинофильмсене кăтартаççĕ. Ку фильмсене китайла куçарнă Кинофильмсене курма халăх нумай çÿрет.

АВСТРИ

ВЕНА, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). В И. Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине Австрире анлă палăртаççĕ. Хуласенче хурлăхлă-чаплă митингсемпе пухусем ирттереççĕ. Владимир Ильич Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Австрири рабочисен юхăмĕн вăтă деятелĕсем, тĕнчери пролетариатăн аслă çулпуçне хăйсем курнă тата пĕлсе тăнă çынсем докладсем тăваççĕ.

Ĕнер каçхине Венăра Австри столицинчи ĕççыннисен хурлăхлă-чаплă ларăвĕ пулнă. Большевиксен партине тата тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государствăна туса хунă В И Ленин çинчен Австрири коммунистсен партийĕн центральлă комитечĕн членĕ Франс Марек доклад тунă

В. И. Ленин кунĕсем тĕлне вырăнти издательствăсем Ленинăн «Мĕн тумалла?», «Государство тата революци» ятлă кĕнекисене, çавăн пекех тата В. И Ленинăн кĕске биографине пичетлесе кăларнă.

АНГЛИ

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат В. И Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарни çинчен редакци çырнă статья пичетлесе кăларнă. Унта хаçат Ленин идейисем пĕтĕм тĕнчене сарăлнине палăртать. «Çак идея ăнăçусем туни çакăнтан палăрса тăрать,—тесе çырать хаçат.—Совет Союзĕнче классемсĕр социализмлă общество туса хунă; Европăн хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче халăх демократи çĕршывĕсем, социализмлă общество тума тăрăшакан çĕршывсем пулса тăчĕç; ирĕклĕхшĕн кĕрешесси хăвăрт аталанса тата вăйланса пырать, çак ĕçри чи пысăк çитĕнÿ вăл Китай Халăх Республикине туса хуни пулать; пур çĕршывсенче те коммунизм влиянийĕ ÿссе пырать».

Ленин рабочи класа эксплуататорсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешсе пымаллине ăнланса илме тата ăнăçлă кĕрешме марксистла меслетпе усă курма кирлине кăтартса панă, тесе çырать хаçат.

ООН Генеральнăй ассамблейин улттăмĕш сессийĕ

Январĕн 19-мĕшĕнчи пĕрлехи лару

Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен

ПАРИЖ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Генеральнăй Ассамблея хăйĕн паян кăнтăрла пулнă пĕрлехи ларăвĕнче СССР делегацийĕ тăратнă ыйтăва—«Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç тата халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» пăхса тухнă.

Англипе Америкăн ООН-ри ушкăнĕ асăннă ыйтăва пĕрлехи ларура сÿтсе явтарас мар тесе пур майсемпе те тăрăшнă. Çав ушкăн ку ыйту тăрăх сасăланă хыççăн кăна делегацисене мĕншĕн резолюцири пĕр-пĕр пункта йышăнассишĕн, теприне йышăнасшăн мар пулни çинчен çес сăмах тухса калама ирĕк памалли йĕрке тăвасшăн пулнă. Çапах та ку ыйту тăрăх пĕрлехи ларура прениссем пуçланнă. Нумай делегацисем сăмах тухса каланă.

Политика комитетĕнче Совет Союзĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тăвасси çинчен панă сĕнÿшĕн 11 делегаци сасăланăччĕ. Вунвиçĕ делегаци нихăш майлă та сасăламан, вĕсем ку сĕнÿ тĕлĕшпе США позицине хÿтĕлеме килĕшмен. Çакăн пирки Америка лагерĕнче шикленсе ÿкнĕ. Паянхи ларура США делегацийĕ чи малтан трибуна умне Тито делегатне—Беблера кăларнă. Вăл совет делегацийĕ сĕннĕ мир программи пирки иккĕлентерекен шухăш сарма хăтланнă. Америка империалисчĕсен тарçи çав шутпа, Геббельс пекех, Совет Союзĕ çинчен питех те усал элеклĕ сăмахсем. Америкăри вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсем юратакан элеклĕ сăмахсене, каласа тултарнă.

Америкăпа Англи блокĕ совет делегацийĕн сĕнĕвĕсене тĕплĕн сÿтсе явассинчен тата вĕсем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнассинчен хăраса ÿкнĕ пирки асăннă блок тĕлĕшпе питех те ырă мар шухăш пĕтĕм тĕнчене сарăлчĕ. Хальхинче вара Америкăпа Англи блокĕнче тăракан делегатсем сăмах тухса каласа çав ырă мар шухăша сирсе яма хăтланнă.

Кунхинче те вĕсем ССР Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартасси, тĕнчери çĕршывсен чăн-чăн контрольне тăвасси, пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсене чакарасси, СССР, США, Англи, Франци тата Китай хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тăвасси, Корейăри çапăçусене халех чарса лартасси, унта перемири тăвасси. 10 кун хушшинче çарсене 38-мĕш параллель патĕнчен илсе каясси, виçĕ уйăх хушшинче ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсене, çав шутра ют çĕршывсен добровольцĕсен чаçĕсене те, Корейăран илсе тухасси çинчен панă сĕнÿсене хирĕç уйрăмах хытă каланă.

Америкăпа Англи блокĕн представителĕсем суйса калянине, суя сăлтавсем кăларса тăратнине хальхинче Совет Союзĕ, Польша, Чехословаки, Украина ССР тата Белорус ССР делегачĕсем тепĕр хут тăрă шыв çине кăларнă.

Генеральнăй Ассамблея СССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский тухса каланă сăмаха питĕ тимлĕ итленĕ. Унăн сăмахне итлеме пынă çынсем тăвăллă алă çупса ырланă.

Унтан Украина ССР делегацийĕн пуçлăхĕ А. М. Барановскипе Белорус ССР делегацийĕн пуçлăхĕ К. В. Киселев сăмах тухса каланă.

* * *

Совет делегацийĕн сĕнĕвĕсенчи 3, 4, 5, 6, 7-мĕш пунктсене—атомлă хĕçпăшала чарса лартмалли, хĕçпăшалсене сахаллатмалли тата çав ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăма тĕнчери çĕршывсен çирĕп контрольне тумалли çинчен калакан пунктсене—хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие пама сĕнсе США, Англи тата Франци тăратнă резолюцие чи малтан сасăланă Генеральнăй Ассамблейăн паянхи ларăвĕнче чылай делегацисем çав резолюцишĕн сасăлама килĕшмен Ку резолюципе виçĕ держава делегацийĕсем Генеральнăй Ассамблейăра мирлĕ пурнăç тăвас ĕçри чи çивĕч те чи кирлĕ ыйтусемпе—совет делегацийĕн сĕнĕвĕсенчи малтрах асăннă пунктсенче палăртнă ыйтусемпе—постановлени йышăнма парас мар шутпа, вĕсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие панипе пăчлантарса лартас е пĕтĕмпех путлантарса лартас шутпа тăратнă ĕнтĕ. Çав резолюцишĕн Англипе Америка блокĕнчи çĕршывсен тата вĕсене майлă тăракан хăшпĕр государствăсен делегацийĕсем сасăланă, çапла майпа ăна йышăннă. Асăннă резолюцие хирĕç 5 делегаци (СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки) сасăланă. 13 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Унтан СССР резолюци проекчĕн 1, 2 тата 8-мĕш пункчĕсене сасăлама тăратнă, резолюцин 3, 4, 5, 6 тата 7-мĕш пункчĕсене хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие памалла тунă пирки вĕсене йышăнассипе йышăнас марри çинчен сасăламан.

СССР сĕнĕвĕсен пĕрремĕш пунктне йышăнассишĕн 5 делегаци, ăна йышăнассине хирĕç 45 делегаци сасăланă. 6 делегаци нихăш майлă та сасăламан. Иккĕмĕш пунктăн Корейăри çапăçусене чарса лартмалли çинчен калакан пайне йышăнассишĕн 5 делегаци, ăна йышăнассине хирĕç 35 делегаци сасăланă (Политика комитетĕнче çав пункта йышăнассине хирĕç 42 делегаци сасăланă пулнă). Вунă делегаци нихăш майлă та сасăламан.

СССР сĕнĕвĕсен иккĕмĕш пункчĕн иккĕмĕш пайĕшĕн—ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсене тата ют çĕршывсен добровольцĕсен чаçĕсене Корейăран илсе тухмалли çинчен калакан пайшăн сасăласси уйрăмах питĕ кăтартуллă пулса тăнă. Политика комитетĕнче çак сĕнĕве хирĕç 42 делегаци сасăланăччĕ. Генеральнăй Ассамблея пленумĕнче вара ăна хирĕç 31 делегаци сасăланă. Пĕрлехи ларура ку сĕнĕве йышăнассишĕн 7 делегаци (СССР, Украина, Белорусси, Польша, Чехословаки, Египет тата Йемен) сасăланă. Вунпĕр делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Совет сĕнĕвĕсен 8-мĕш пунктне—пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тумалли çинчен калакан пункта йышăнассишĕн сасăласси те кăтартуллă пулса тăнă. Ку сĕнĕве хирĕç 31 сасă пулнă. Мире сыхламалли килĕшÿ тăвассишĕн 11 делегаци (СССР, Чехословаки, Польша, Украина ССР, Белорус ССР, Афганистан, Бирма, Египет, Йемен, Сири, Саудовски Аравия) сасăланă. Вунпĕр делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка çинчен тăракан ыйтăва пĕрлехи ларура сÿтсе явни

ПАРИЖ, январĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). ООН Генеральнăй Ассамблейин ĕнер ирхине пулнă ларăвĕнче Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явнă. Ку ыйтăвăн тĕп шухăшĕ çапла: Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африкăн территорийĕ вăл ĕлĕк Кăнтăр Африка мандат тăрăх тытса тăнă, управлени ĕçне туса тăнă территори пулнă, халĕ вара ăна чăннипе Кăнтăр Африка Союзĕн провинцийĕ туса хунă ООН Генеральнăй Ассамблейи хăйĕн халиччехи сессийĕсенче Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка пирки 4 резолюци йышăннă. Çав резолюцисенче Кăнтăр Африка Союзĕн правительствине Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка территорине тĕнчери çĕршывсен опекине илесси çинчен килĕшÿ тума кирлине кăтартса панă. Анчах Кăнтăр Африка Союзĕн правительстви çав решенисене пурнăçлассинчен пăрăннă, асăннă территорие тÿррĕмĕнех Кăнтăр Африка Союзĕ çумне пĕрлештерес çул çине тăнă. Ку ыйтăва опека енĕпе ĕçлекен комитет хальхи сессийĕнче сÿтсе явнă чухне хăшпĕр ăрусен çулпуçĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен организацине çырусем янă, унта вĕсем Кăнтăр Африка Союзĕн влаçĕсем Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африкăри халăхсене хытă хĕсĕрлени, вĕсене хисеплеменни çинчен çырнă. Комитет çыру янă çынсем мĕн каланине итлемелле тесе постановлени йышăннă, вĕсене Парижа пыма чĕннĕ. Анчах Кăнтăр Африка Союзĕн правительстви вĕсене хăйсен çĕршывĕнчен Парижа кайма чарнă.

Ку ыйтăва сÿтсе явнă хыççăн опека енĕпе ĕçлекен комитет икĕ резолюци йышăннă, вĕсене январĕн 19-мĕшĕнче пленумра çирĕплетме тăратнă. Пĕрремĕш резолюцире («А» саспаллипе паллă тунă резолюци) Кăнтăр Африка Союзĕн правительствипе Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка территорийĕ пирки калаçса татăлма тунă специальнăй комитета çĕнĕрен ĕçе тытăнма хушма палăртнă. Иккĕмĕш резолюцире («В» саспаллипе паллă тунă резолюци) Генеральнăй Ассамблейăн ĕлĕкхи позицине—«ку территорин тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хальхи ларутăрува тивĕçлĕ йĕркепе улăштармалли çул-йĕр, ăна тĕнчери опека системине кĕртни пулĕччĕ» текен позицине тепĕр хут çирĕплетнĕ.

СССР делегацийĕ Кăнтăр Африка Союзĕ Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африкăна законсăр йĕркепе хăй аллине çавăрса илнĕ тесе шутлать. Çав территорие тĕнчери опека системине кĕртмелле тесе шутласа, совет делегацийĕ иккĕмĕш резолюцие йышăнассишĕн сасăланă Ку ыйтупа халиччен ĕçленĕ специальнăй комитета Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка ыйтăвне Кăнтăр Африка Союзĕпе калаçса татăлнипе йĕркелеме хушнă пулнă. Çав комитет ку ыйтăва йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те тăвайман. Апла пулсан ку комитета çĕнĕрен тума кирлĕ мар. Çавăнпа та СССР делегацийĕ «А» саспаллипе паллă тунă резолюцие хирĕç сасăланă.

Опека енĕпе ĕçлекен комитет çавăн пек решенисем йышăннине хирĕç протестлесе Кăнтăр Африка Союзĕн делегацийĕ çав комитетра ĕçлеме килĕшмен. Вăл халĕ пленумра пысăк сăмах тухса каланă, опека енĕпе ĕçлекен комитет йышăннă решенисене улăштармалла тăвасшăн пулнă. Вăл Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка опекăра тăракан территори мар, çавăнпа та комитетăн çыру янă çынсем мĕн каланине итлеме, чĕнме право пулман, тенĕ. Кăнтăр Африка Союзĕн делегачĕ опека енĕпе ĕçлекен комитета хирĕç тата Пĕрлешнĕ Нацисен пĕтĕм организацине хирĕç хытă каланă Вăл тухса каланинчен Кăнтăр Африка Союзĕн правительстви Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка территорийĕнчи хăй туса хунă йĕркесене улăштарма шутламанни палăрнă.

Кăнтăр Африка Союзĕн позицине хÿтĕлесе колонисем тытса тăракан чылай державăсен—Англин, Австралин, Бельгин тата ытти çĕршывсен представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем Генеральнăй Ассамблейăн «пĕр-пĕр ĕçе çавăн пек тума кирлине ĕнентермелли» меслетпе кăна ĕçлемелли, çапла вара, унăн Кăнтăр Африка Союзĕ килĕшме шутламан решенисене йышăнмалла марри çинчен каланă. Бельги делегаци: Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африкăна опека системине кĕртесси çинчен каласма та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен Кăнтăр Африка Союзĕ çавăн пек тума килĕшмест, тенĕ.

Анчах çав державăсем ытти çĕршывсен делегацийĕсене хĕсме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Чылай çĕршывсен представителĕсем Кăнтăр Африка Союзĕ ООН Генеральнăй Ассамблейин халиччехи пур решенийĕсене те нимĕн вырăнне хуманнине, опека енĕпе ĕçлекен комитет членĕсен ытларахăшĕн шухăшне шута илменнине палăртнă.

Кăнтăр Африка Союзĕн делегачĕ опека енĕпе ĕçлекен комитетăн çыру янă çынсем мĕн каланине итлеме право çук тесе калани тĕрĕс марри не Инди делегачĕ палăртнă. Кăнтăр Африка Союзĕн делегачĕ хăйсен çĕршывĕнчи халăх ячĕпе калама тата ĕç тума пултараймасть. Вăл хăйсен правительствин представителĕ кăна, халăх представителĕ мар, тенĕ малалла Инди делегачĕ. Кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи Африка территорийĕнче урăх раса çыннисене хисеплеменнине, хытă хĕсĕрлени, вĕсене ытти халăхсенчен уйрăм усрама тăрăшнине. Кăнтăр Африка Союзĕн правительстви çав фактсене намăссăр ĕçсем тесе шутламаннине Инди делегачĕ уйрăмах палăртнă.

Унтан резолюцисене сасăлама тăратнă, делегацисен ытларахăшĕ вĕсене йышăнассишĕн сасăланă Çапла вара, асăннă резолюцисене йышăннă.

Экономикăпа финанс ыйтăвĕсен комитетĕнче

СССР сĕнĕвĕсене йышăнас ĕçе США делегацийĕ чăрмантарма хăтланни ăнăçсăр пулнă

ПАРИЖ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). ООН Генеральнăй Ассамблейин экономикăпа финанс ыйтăвĕсен комитетĕнче тĕнчери экономика çинчен пăхса тухнă, ку ыйту тăрăх хатĕрленĕ резолюци проекчĕсене сасăлама тытăннă.

Тĕрлĕ ăнсăртлăхсене тата инкексене пула—çанталăк типĕ тănипе тырă пулмасан, çĕр чĕтресен, вулкан çĕнĕрен вĕри шĕвек сирпĕтме тытăнсан тата ытти çавăн пек сăлтавпа выçă тăрса юлнă халăха пулăшас ыйтупа Чилипе США пĕрле резолюци проекчĕ тăратнă.

Ку резолюци проектне кĕртме совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă Тĕп вырăнта тăракан тÿрлетÿре: Генеральнăй Ассамблея пур государствăсене те апат-çимĕç сахаллипе йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ тата выçлăх тÿсекен районсене пулăшу парас ĕçе пулăшу паракан çĕршывсем политика, экономика тата çар ĕçĕ енĕпе усă курассипе çыхăнтармалла мар тума сĕнет, тесе çырнă. Совет делегацийĕ тата чылай çĕршывсенче апат-çимĕç çитменнипе тата выçлăхпа кĕрешме тĕнчери пуянлăхсене нумайрах пухма, çак ĕçе васкасах хĕçпăшал хатĕрлессине чарса лартнипе тата гражданла мирлĕ производствăна сарнипе пурнăçлама сĕннĕ.

Комитетри делегацисен ытларахăшĕ совет делегацийĕ пулăшу ыйтакан çĕршывсен—экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен ют государствăсене пăхăнса тăракан çĕршывсен интересĕсене хÿтĕлес шутпа çавăн пек сĕнÿ панине лайăх ăнланнă Çапах та США делегачĕ хăйсен резолюци проектне хÿтĕлесе темиçе хутчен те сăмах тухса каласа, хăйсем майлă тăракансем сасăланипе асăннă сĕнĕве сирсе яма май килессине шанса, совет делегацийĕн сĕнĕвне хирĕç каланă. СССР представителĕ унтан: совет делегацийĕн тÿрлетĕвне США йышăнма пултарать-и, тесе ыйтсан, Америка делегачĕ мăнкăмăллăн çапла ответленĕ: США ăна йышăнма килĕшмест, тенĕ.

Анчах Совет Союзĕн чи пысăк тÿрлетĕвне нумай делегацисем ырланă. Ĕç сасăласси патне çитсен, США, Англи, Франци тата ытти хăшпĕр çĕршывсен делегацийĕсем те Совет Союзĕн сĕнĕвне хирĕç сасăлама хăяйман. Ăна йышăнассишĕн 17 делегаци сасăланă. хирĕç 4 делегаци сасăланă. 27 делегаци нихăш майлă та сасăламан.

Çапла вара, совет делегацийĕн сĕнĕвне комитет йышăннă, резолюцие уйрăм пункт туса кĕртнĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç халиччехи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтра уйрăмах паллă улшăну пулман. Уйрăм участоксенче хăшпĕр çĕрте çапăçнă, пĕр-пĕрне хирĕç тупăсемпе вăйлă пенĕ. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн икĕ атакине ăнăçлă сирсе янă, ăна чылай пысăк сиен кÿнĕ.

Вăтаçĕрти фронтра. Хвачхоньрев çурçĕртерехре тата Кымхва районĕнче, тăшман танксемпе артиллери пулăшнипе пысăк пĕлтерĕшлĕ сăртсене тытса илме хăтланса, темиçе хутчен хытă тапăнса атакăсем тунă. Тăшмана хирĕç тупăсемпе тата пăшалсемпе вăйлă пенĕ, унăн çухатусем пысăк пулнă. тăшман каялла чакнă. Çак çапăçура Халăх çарĕн чаçĕсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çын ытла вĕлернĕ. амантнă тата тыткăна илнĕ. тăшманăн 3 танкне тата 10 ытла автомашинине пĕтерсе тăкнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ. виççĕн тăшман самолечĕсем. Вонсан, Хамхын тата Аньчжу районĕсенчи мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахма хăтланнă.

В. В. Чебухов

1952 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн Василий Васильевич Чебухов вилсе кайрĕ.

В. В. Чебухов юлташ 1915 çулта Куславкка районĕнчи Варасăр ялĕнче çуралнă. 1933 çулта вăл Горькири Государство университетĕнчен вĕренсе тухнă, унтан çав университетăн аспирантурине кĕнĕ.

1941—1942 çулсенче В. В. Чебухов юлташ малтан ВКП(б) Обкомĕн инструкторĕ, каярахпа ВКП(б) Куславкка райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Çак ĕçрен вăл Совет Çарне каять. Фронтра йывăр аманнă хыççăн, В. В. Чебухов юлташ 1943 çулхи август уйăхĕнче каялла Куславкка районне таврăнать те райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Çак ĕçрен ăна ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Партин аслă шкулне вĕренме яраççĕ, унтан вăл 1944 çулта вĕренсе тухать.

Партин аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, В. В. Чебухов юлташ ВКП(б) обкомĕ çумĕнчи парти шкулĕн директорĕ, каярахпа—ВКП(б) Куславкка райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ, вара—икĕ çул ытла—ВКП(б) обкомĕн лекторсен ушкăнĕн руководителĕ пулса ĕçлет. 1947 çулхи апрель уйăхĕнчен пуçласа В. В. Чебухов юлташ Чăвашсен литература, чĕлхе тата истори тĕлĕшĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн ученăй секретарĕ пулса ĕçленĕ.

В. В. Чебухов юлташ большевикла партин шанчăклă ывăлĕ пулнă. Вăл парти ретĕнче 1939 çултанпа тăнă. Вăл тимлĕ тата тÿрĕ кăмăллă юлташ пулнă, халăхшăн ĕçлес тĕлĕшпе пример кăтартнă. В. В. Чебухов сăнарне унпа пĕрле ĕçленĕ тата унăн пурнăçне пĕлекенсем нумайлăха асра тытса усрĕç.

Юлташĕсен ушкăнĕ.

Спорт хыпарĕсем

Ялти йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ

Январĕн 21-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсемпе конькипе ярăнакансен республикăри ăмăртăвĕ вĕçленчĕ. Йĕлтĕрпе тата конькипе хăвăрт ярăнас, йĕлтĕрпе трамплин çинчен сикес тата фигурăсем туса ярăнас енĕпе икĕ кун хушши ăмăртнă хыççăн, Чкаловски районĕнчи спортсменсен команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ.

Вăрмар районĕнчи Каланов колхозник 18 километра 1 сехет те 14 минут та 27 секундра ярăнса тухса, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Вăл Пĕтĕм Союзри спорт классификацийĕн пĕрремĕш разряд нормине тултарчĕ. 18 километр ăмăртса ярăннă чухне иккĕмĕш вырăна Чкаловски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Бикчурин, виççĕмĕш вырăна—Канаш районĕн представителĕ Алексеев тухрĕç. Вĕсем те пĕрремĕш разряд нормине тултарчĕç.

30 километра 2 сехет те 26 минут та 27 секундра ярăнса тухса, Бикчурин юлташ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Çак ăмăртура Вăрмар районĕн представителĕ Каланов иккĕмĕш вырăна, Вăрнар районĕн представителĕ Иванов—виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Ялсенчи йĕлтĕрçĕсен республикăри ăмăртăвĕнче Чкаловски районĕнчи учительница Абакумова юлташ паха тĕслĕх кăтартрĕ. Вăл 5 тата 10 километра хăвăрт чупса пуринчен те мала тухрĕ, 10 километра 50 минут та 40 секундра чупса тухса, пĕрремĕш разряд нормине тултарчĕ.

5 километра йĕлтĕрпе чупса иккĕмĕш вырăна Çĕмĕрле районĕнчи Пыркова колхозница, виççĕмĕш вырăна—Йĕпреç районĕнчи Хушкина колхозница йышăнчĕç. 10 километра ăмăртса чупнă чухне Чкаловски районĕнчи учительница Стеклова иккĕмĕш вырăна. Улатăр районĕнчи учительница Поросенкова юлташ—виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Слалом меслечĕпе ярăнас енĕпе арçынсем хушшинче Додонов (Улатăр районĕнчен), хĕрарăмсем хушшинче—Григорьева (Сĕнтĕрвăрри районĕнчен) мала тухрĕç.

Йĕлтĕрпе трамплин çинчен сикес енĕпе Йĕпреç районĕнчи Петухов колхозник мала тухрĕ.

«Молния» спорт обществи стадионĕнче ялсенчи спортсменсем конькипе хăвăрт ярăнас енĕпе ăмăртрĕç. Улатăр районĕнчи Лабынина колхозница 250 тата 500 метр хушшине, Çĕрпÿ районĕнчи Максимов колхозник 500 тата 1.000 метр хушшине пуринчен те хăвăрт ярăнса, малти вырăнсене йышăнчĕç.

Январĕн 21-мĕшĕнче каçхине ялсенчи йĕлтĕрçĕсемпе конькипе ярăнакансен республикăри ăмăртăвĕ вĕçленнĕ ятпа физкультурниксен вечерĕ пулчĕ. Кунта мала тухнă физкультурниксемпе физкультурницăсене тата мала тухнă командăсене дипломсемпе хаклă парнесем пачĕç.

Пĕлтерни

Январĕн 23-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» пĕрремĕш çул вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Ленинпа Сталин большевиксен партийĕн теориллĕ никĕсĕсене туса хатĕрлени».

Семинар руководителĕ—А. Ф. Сютруков юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор М. Н. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01218 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.